К С(Чув)
Я46
34259-чув

Петӗр
ЯККУСЕН



# ÇАВРА КӲЛӖ

Национальная библиотека ЧР
4-034259

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока





КС(чув)
Я 46

Петĕр
ЯККУСЕН

# ÇАВРА КÿЛĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1993

1К84.09(=Чув)6-5

ББК 84 Чув 7-5
Я 76

2.84(2РОС=Чув)6-5

ПРОВЕРЕНО
2010 06 СЕН 2017

**Яккусен П. Я.**
Я 76 Ҫавра кӳлӗ: Сӑвӑсем.—Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1993.—79 с.

Петӗр Яккусен сӑввисене поэзие юратакансем пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ. Ку кӗнекене поэтӑн ҫӗнӗ хайлавӗсене кӗртнӗ, вӗсенче авторӑн ку таранччен уҫҫӑн палӑрнӑ лиризмӗ те, чун тӗпчинчи ҫул ҫӳревӗ те, ҫутӑ тунсӑхӗпе тарӑн шухӑшлӑхӗ те малалла аталанаҫҫӗ. Сӑвӑҫ пӗр хӑнӑхнӑ ҫулйӗрпе юрттармасть, ялан ҫӗнӗрен ҫӗнӗ кӗвӗҫемӗ шырать.

**ББК 84 Чув 7-5**

Я $\frac{4702710202-42}{М\ 136(03)-93}$ 57—93

ISBN 5-7670-0659-8

34259-чув

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1993

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

Çеçен хир варринчи вăрманта
Çын ури таптаман вырăнта
Йăлтăр-йăлтăр çиçет çавра кÿлĕ.

Эпир курнă сăрт-тăван хапи,
Эпир пурăннă харпăр шăпи
Таса кÿлĕшĕн — кунлăх тусанĕ.

Ан шыра ху сăнна шыв çинче,
Кÿлĕ куçĕ пăхать пит инçе:
Кÿлĕре çăлтăрсем курăнаççĕ...

Шурăях та хута сăрласа
Эпĕ мар, хуçăк чун сăрлатать:
Сăрхăнать çеç сĕткен, сăрхăнать.

Ман тăванăм та халь каç кăна,
Ман юлташăм та халь çил кăна,
Манăн тусăм та халь хут кăна.

Чун варри — чун юрри — йыварри,
Чун хĕрри — чун йĕрри — çыврайми,—
Кун килет: чĕрĕли-чĕрĕлми...

Пур-и, çук-и кунта пĕлекен?
(Пурнăçа эп ăнлантăм!—текен.)
Сăрхăнать, сăрхăнать çут сĕткен.

Каç кăна. Çил кăна. Чун кăна.
Пурнăçа юратса хак пама,
Тен, каçри хуçăк йывăç кăна

Пултарать. . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . .

❁

Хĕвел çути, тăпра сĕткенĕ,
Ыр кăмăллă ĕçчен алли...
Çак тупсăмран никам иртеймĕ,
Ку чăнлăх — ĕмĕрсем валли.

Анчах,
Тыр-пул пухса кĕртсессĕн.
Уй-хир юлсассăн çаралса,
Каш-каш кĕрхи çилсем вĕрсессĕн
Пĕлĕтсене хăваласа

Каллех эп тупсăмсăр юлатăп.
Вара
Сирсе кĕрхи сĕме
Кĕркуннере, çилре шыратăп
Вĕсен салхуллă тупсăмне.

Илеме курнипе чун юрлать-и?
Саванать-и? Эппин юрла.
Ăраскал арăсланĕ хартлатĕ,
Чупса çӳрĕ йĕри-тавра.

Юррусем тăрисем пулса вĕçĕç,
Арăслан — тăрие тăшман мар.
Ан итле, никама та ан вĕчĕх,—
Юрруна çирĕпрех çунат пар.

Тăрисем тӳпене тухмасассăн
Вут çĕлен шăвĕччĕ тӳпере...
...Этемсем юрлама пăрахсассăн
Çут тĕнче сӳнессе пĕлтерет.

Çунтарать-и сана хура вут?
Тĕппипех çунтарса ячĕ-ши?
Тăвансем хушшинче те — ют,
Қалаçатăн, кулатăн — ячĕшĕн.

Тараватъ кĕреке хушши.
Хуçисем, хăнисем пит кăмăллă.
Чун-чĕреçĕм, мĕн пулчĕ-ши?
Қаçлăх мар пуль, яланлăх касăлнă.

Тĕттĕмсем ăшĕнче — сĕмми.
Чи шалта çеç пĕр пĕчĕк çăлăнăç:
Ялăнти хурлăхан тĕмми —
Вăрттăн шанчăкăн янкăс çулăмĕ...

Эс кăçал пурăнан эппин.
Килес çул-и? Çитсессĕн курăпăр.
Çуркунне шăпчăкран вут илсен
Чи хитре юрруна юрлăн-ха.

❋

Кулнă пек туса çӳретпĕр
Е хăш чух телейлĕ пек...
Хамăра суеçтеретпĕр
Çăлăнăç тупаяс пек.

Чăннине чăнах калас тăк
(Тĕпсĕр чун тĕпне тинкер!)
Пурнăçăм та — лăстăк-ластăк,
Савăкăм та — те синкер?

Нимскере ĕненейместĕп.
(Çĕрĕм-шывăм пур, ратне...)
Ма кунта ытлашши — эпĕ?
(Çитрĕм чăнлăхăм патне...)

Пĕртен-пĕр тĕнче пăтравĕ
Акăш-макăш сасăсем
Кăларать те — чун шыравĕ
Тесшĕн — çыртăм сăвăсем...

Чăннине чăнах калас тăк,
Хам та ăнланмарăм эп:
Те шуйттан манпа алхасрĕ,
Те турра кĕл турăм эп.

***

Анкă-минкĕ вăхăт арпаштарчĕ
Кăмăл-туйăма та ăс-пуçа...
Турăçăм, çĕтсе кайма ан парччĕ,
Турăçăм, эс пур пулсан — каçар.

Юрпала ӳкет-и шурă кунăм,
Çумăрпа килет-и хура каç,
Мĕн шыраслăн талпăнать-ши чунăм,
Ма пуррипеле çеç çырлахмасть?

Сар çурта умне чĕркуçленесчĕ
Пĕр самант чăн-чăннине туйма...
Ĕненместĕп çав. Ĕненейместĕп.
Кирлĕ мар эппин хама суйма.

Кам пире тĕллевсĕре хăварчĕ?
Уйăрмастпăр кунпала каçа.
Турăçăм, çĕтсе кайма ан парччĕ,
Турăçăм, пурах пулсан — каçар.

***

Виçĕ пичче манăн, виçĕ пичче.
Выляса лараççĕ сăрт çамкинче.
Хĕвел питтинче, чечексем хушшинче,
Шурăрах кĕренрех улмуççи айĕнче.

Аслă пичче Микулай йăл кулать,
Кĕçĕннисене савăнса калать:
— Ах, кăçал улмуççи çуралать!
Кĕркунне пан улми пит нумай пулать.

— Микулай пичче, кил-ха эс, кур,
Манăн тетте чечче кантăкĕ пур,

Хĕрлĕ çеçкеллĕ те юр пек шап-шур,—
Тет мухтанса вăталăххи Якур.

Шарламасть кĕçĕнни, Мишша пичче,
Калаçма та пĕлмест, пĕчĕкскер,
Нăш та нăш тутарса, пуç чиксе
Кăпшанкăпа вылять, тĕлĕннĕскер.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр ўкеççĕ çĕре çеçкесем
Сывлăшра, чунăмра хура йĕр йĕрлесе...
...Пан улми тутанса пăхас çук пиччесем,
Вăрçă чух чирлесе вилнĕскерсем.

Виçĕ пичче манăн, эп курман пичче.
Выляса лараççĕ сăрт çамкинче,
Хĕвел питтинче, хĕрессем хушшинче,
Шурăрах кĕренрех улмуççи айĕнче.

❋

Кунĕ кичем. Йăлăхтармăш чаналлă.
Тем хирĕлеççĕ паян чанисем.
Сарă хĕвел те шатраллă, паталлă,
Кăмăлсăр, сăнсăр — иртен-çўренсем...

Çўрех урса, ылханса, пăшăрхавлăн,
Ларах пуçна ик алпа хĕстерсе.
Ав шăтăрнак хыçĕнче пит хавхаллă
Пĕр шĕвĕркке айкашать ĕхлетсе.

Шăрчăкпала çав ача вăй выляççĕ:
Пытанмалла, тармалла вирхĕнсе...
...Саншăн çак кун — тарăхтармăш пулсассăн
Юлĕ юмахлăн — вĕсен асĕнче.

Çурçĕр çилĕ вĕрет. Хăрамастăмччĕ-çке
Хĕллерен, çерçисем ӳкмелле сивĕрен...
Çил-тăман варринче çурăлсассăн çеçке
Çуркунне килессе-çитессе пĕлтерет.

Сар хĕвел питтинче ялти вата çынсем
Ăшăнса калаçса ларнине ас илен...
Қам — туять, кам — пуять. Çулĕ тĕрлĕ тĕнчен.
Хăш çулне-сукмакне суйласа эс илен?

Е тĕнче хăй сана уттарать-и çулпа
Суйлама та памасăр хăвна кирлине?
Çил-тăман варринче курăнать-им шăпа?
Ма çеçке çурăлать çил-тăман варринче?

Эп — пуйман. Туйнă çеç. Çил-тăман çулĕпе
Шур мĕлкен мĕлтлететĕп. Ачалăх килет:
Тăкса ятăм пăрça, пурăнас кунсем пек,
Пăрçисем сиккелеççĕ çерçи чĕппилле.

Сăмах, сăмах — упа лĕппи...
Çунать асамлăх кантăкĕ.
Çак кантăкран кĕрейĕп-и
Тесе вĕсем шакканă пек.

Пĕрре сăмах — каç варринче,
Тепре — вĕçет пит çывăххăн...
Курнать те витĕр кĕленче,
Сăмах кĕреймĕ — çылăхлă.

Тĕнче мана тинкерчĕ куçăмран.
Çÿçентерсе, шăтарасла тинкерчĕ.
Çав курăмра — сенкерлĕ уçлăхра —
Телей нумай.
Çителĕклех хĕн-терчĕ.

Шари! саспа çĕн пурнăç пуçлансан,
Кĕлеткене кĕрсен сывлăш илемĕ
Çич хут тӳпен хăш хучĕ пулнă сан?
Хăш сийĕнче чуну вĕçсе çӳренĕ?

Чи çӳлтинче е аялти хутра?
Пĕлетĕн-и хăш — аслă, хăшĕ — кĕçĕн?
Тĕнче манаacларĕ хăлхаран:
«Çӳлтен те ӳкĕн, çĕр çинчен те вĕçĕн...»

Сĕм вăрман варринче тăрăхла шур сĕтел,
Ик айккин — тăхлачсем, хăтасем...
...Ку енче — сарăях, ылтăнах та хĕвел,
Леш енче — авалхи сăнарсем.

Пыл сăри юхнăçем тухату сăмахсем
Юхтараççĕ сĕтел хушшинче:
Эп пĕлмен сăмахсем, эп илтмен сăмахсем
Илтĕнеççĕ кунта леш енчен.

Хăналанăр кăна, ан чĕнсемĕр мана,
Ĕлĕкхи хăнасем, эп халех пырас çук.
Сар хĕвелĕн çути кунта çеç курăнать,
Леш енче — ун çути те, ăшши те çук.

Йк тĕнче чиккине уйăрасчĕ. Текех
Курас марччĕ тахçан вилнисен ĕçкине...
...Пурăнатпăр çапла. Ĕмĕр вăрăм пекех.
Пĕлсе тăнă çинчех ĕмĕрсем кĕскине.

Кунсем килеççĕ те — çĕтеççĕ
Йĕрри-палли те юлмасла.
Çил ачисем кĕтӳ кĕтеççĕ
Пĕлĕтсене хăваласа.

Пĕлĕчĕсем! Итлесшĕн мар-тăр.
Енчен енне — сапаланса...
Ыр кун иртсен асра йĕр картăр
Начар кунăрсене манса.

Вара çуталĕ чун хавалĕ,
Ыр сунĕ кунăр — пуласси:
Çил ачисем пĕлĕт хăвалĕç,
Шартлатĕ чăпăркка сасси.

Йывăçăрсем алне сулкалĕç
Чӳк тунă евĕр çумăра,
Çав çумăр шавĕнче çухалĕç
Начар кунсем те — авăрта.

Ах, пĕлеймерĕм, йăлт эп картрăм:
Ырри-усалĕ... Чун — суран.
Эп çавăнпа çил ачи мар-тăр,
Çапах та çил ачи — тăван.

Хăрса пыракан юманлăх:
Унта та кунта — шурă шăмă...
Эп халĕ йăлтах маннă,
Таса кĕленче пек — сăнăм.

Эп халь пĕтĕмпех маннă,
Телейлĕ эппин эп халь...
Хăрса пыракан юманлăх,
Чакса пыракан вăй-хал.

Ҫала-ха, мĕн-ма этемĕн
Манас, манăçас килет?
Мансан савăк тупнă тейĕн,
Е тупнă тейĕн сипет.

Хăрса пыракан юманлăх.
Вăрман хушшипе иртеп.
Туясшăн хама йăлт маннăн
Пулманнине ас илеп.

Чунсем пушă, ай ма пушă?
Тарăху кăшланăран.
Çĕр вăр-вăр тăвать пĕр хушă
Е аран-аран-аран...

Ҫăшт — самантлăх çеç — инçетлĕх.
Кунĕн-çĕрĕн — чун тĕрми.
Пурăнасчĕ ытлăн-çитлĕн —
Пурăнмашкăн та пĕлми.

Вăрмансем пире савмаççĕ,
Ылханаççĕ кӳлĕсем,
Уй-хирсем хаяр сунаççĕ —
Ма тискер эсĕ, этем?

Ĕмĕт сӳнчĕ, ĕмĕт шанчĕ.
Такама ĕненмелле?
— Ма этемĕн чун пушанчĕ?
— Уç чунна тӳпенелле.

*

Çуркунне çеçкисем
Килсерен кăтраланĕç:
Çĕмĕртсем, сиреньсем,
Чиесем, пан улми...
Тăрăлас ĕмĕтпе
Шетмĕ шывĕ пăтранĕ
Çыранти çынни пек
Йăвашраххăн пулма.

Ĕмĕте-шанчăка
Пĕрре мар эп çухатрăм,
Пит тискер-çке вĕсем,
Қаçарусăр каçсем...
Эсĕ çеç, Тур Пани,
Мана чăтрăн, юратрăн.
Савакан çын пулсан
Пурăнать те этем.

Çуркунне çеçкисем
Шывпала юхса кайĕç.
Эсĕ маншăн, савни,
Юрату кăна мар...,

Манăнах çылăхсем,
Умăнти йывăр айăп,
Чун тĕпне ларнăскер,
Çуркалать юхăма...

❋

Ырă ĕç, сутă ĕç сăвапне кураясшăн
Арман чуль айĕнчи курăка хăтарма
Тапаçлантăн, кустартăн ăна, мур илесшĕ,
Урăх курăксене ун айнех пусарма.

Сан ятна, ман ята, ун ятне — Сизиф чулĕ,
Икĕ пин çул хушши катăлма пĕлменскер.
Ăнкармастăп: те пур чун валли тӳпе çулĕ,—
Кĕлетке валли пур — çĕр çинче — тĕмеске.

Ырăпа усала уйăрмасть çут çанталăк,
Хурланма, хĕрхенме, савăнма та пĕлмест,
Çавăнпа, тен, пире вăрманта питĕ лайăх,
Çавăнпа чун туртать пуль çак кӳлĕ хĕрне.

❋

Қам çурхи кунсене чĕре витĕр пĕлет,
Қĕрхи кун та, паллах, тивĕçет...
Халлĕхе сивех мар, малтанхи çилпеле
Малтанхи сарă çулçă вĕçет.

Қăмăлна та ӳкет сарă çулçă-салху,
Иртсе кайнă пек çу — уссăрах, уссăрах...
Тунсăхрах сан куçу, тунсăхрах шухăшу,
Қилес кунĕ — пушшех тунсăхрах.

Эс — юман раттинчен, эс — çăка раттинчен,
Сарă çулçă — эс тăкнă куççуль.
Ан кулян, ан шуйхан кĕркунне уттинчен,—
Кĕркунне шанчăкна илмест пуль?

Шанчăку-сĕткенӳ вулă витĕр вылять
Тымарта упрама тивĕçе...
Кам кĕрхи кунсене чĕре витĕр туять,
Çурхи кун та, паллах, тивĕçет.

Хуллен хуралса пĕлĕт татăкĕ тухĕ
Таçтан, тӳпепе çĕр пĕрлешнĕ тĕлтен,
Аçа-çиçĕм çиçĕ хăрушшăн та шуххăн,
Çуса çумăр иртĕ ман ялăм çинчен.

Кайран çут çанталăк ӳпке туллин сывлĕ,
Варсем тăрăх кайĕ тĕтре тăвалла.
Кăштах сĕт тутиллĕн те туйăнĕ сывлăш
Çу çумăрĕ чăпăл кĕртсессĕн яла.

Хăçан та пулин килсе çăвĕ çак çумăр
Пăсмасăр пин çуллăх йăли-йĕркине...
Йăлт пулĕ çапла, анчах пулĕ вăл мансăр —
Туясчĕ туллин халь кашни тумламне.

Хура вут — аçтаха çăварĕ,
Кунăмсем те — хура.
Ан итле, çĕленӳ канаш парĕ:
«Тем тума та юрать...»

34259-чв
Чувашская Республиканская библиотека им. М. Горького

Ăçтаха умлăн-хыçлăн сывларĕ,
Çавăрттарчĕ пуçа,
Эп упранă тасалăх кăварĕ
Сÿнчĕ, сÿнчĕ пуль çав...

Сÿнеймен-ха. Ӳксессĕн те тăтăм.
Чăт, чĕреçĕм, çун!
Те тĕтре, те тусан, те тĕтĕм,
Те тĕнче, те ман чун...

Аçтаха халсăрланчĕ, хашкарĕ,
Хура вут — сирĕлет,
Хупăнать асав шăллă çăварĕ —
Халĕ — ма́нăн черет.

Хĕвелпе вăйланать тĕлкĕш вутăм,
Пуç таятăп çĕре.
Аçтаха хуррине эпĕ куртăм,
Тур ан патăр — сире.

Çыннисем сив çăлтăр пек çÿреççĕ,
Кашниех хăй нушипе çÿрет...
Пăшăлтатрăм эпĕ: чăт, чĕреçĕм,
Сивĕ çăлтăр пек пулма вĕрен.

Эпир мар-и çыншăн тунсăхланă,
Чун уçман-и калаçса темччен?
Пĕр-пĕрне эпир халь йăлăхтарнă—
Мĕн тăвас? Хула этемĕсем.

Пĕлĕт анине уçса хăварнă.
Эп утатăп. Шурă юр ӳкет.
Юр кăна пурне те танлаштарнă —
Шуратать пурне те пĕр пекех.

* * *

Мăян хушшине шăтса тухнă
Хура хурама хунавĕ...
Эс — манăн пĕлтерĕшсĕр тунсăх,
Çĕрле мĕлкисен юнавĕ.

Эс — манăн савусăр кунăм,
Эп маннă, çухатнă йăпанăç,
Эс — манăн салхуллă куллăм —
Кĕрхи йĕпхӳри хĕвел анăç.

Ей-ей ĕмĕр тăршшĕ — тĕрлĕ!
Сана куçармашкăн кăклатăп,
Хура хурама. Эс — кирлĕ,
Санпа тунсăха палăклатăп.

Садра пан улми хĕрелĕ,
Турат усăнмалăх — йывăр...
...Эп савăклă чух — ас илтерĕ
Хура кунăма пĕр йывăç.

* * *

Юмансем, тирексем, çăкасем...
Ăнланатăп сире: пурăнасшăн.
Вăрмана шалалла кĕнĕçем
Куçăма мĕлкесем курăнаççĕ.

Вулăсем хыçĕнчен пытанса
Хĕрĕх çул ман хыçран йĕрлеççĕ:
Ахăлти сасăсем — вăрăнсан,
Тӳрленсен — мĕлкесем йĕреççĕ.

Ан кулсамăр манран эп çĕтсен...
Куçа куçăн пуплер-и çывăххăн?
Йĕрлекен мĕлкесем, çынсем,—
Эп те сирĕн пекех çылăхлă.

Утаяс çулсене çухатса
Хатĕрлетĕр эсир шырлан-чикĕ.
Ан тăрмашăр алтса, тухатса —
Хам эп вĕçнĕ, хамах — ӳкĕп.

Çитрĕ. Хĕл ларчĕ.
Сивĕ кастарчĕ.
(Сивĕ тивми пулнă чун!)
Çил те çил мар пек,
Хĕл те хĕл мар пек
Ху çуркунне пулнă чух.

Шăпчăк сассиллĕ
Ăшă çитсессĕн
Çур кунĕсен рехет пур.
Шанчăк çутиллĕ
Ĕмĕт сӳнсессĕн
Ху çуркунне пулса кур!

Çил-и? Çĕнетĕн.
Хĕл-и? Тӳсетĕн.
«Эп — çуркунне халĕ!»—те...
Чун чĕкеçне те,
Чун тăрине те
Эсĕ вĕçтер пĕлĕте...

***

Тулта тӑманӗ алхасать ав,
Кӗрт йӑпшӑнать кантӑк ҫумне.
Вучах чӗртсе хуран ҫакатӑп,
Пӑхса ларатӑп вут ҫине.

Мӑрье калать асамлӑ ҫемӗ
Кам ячӗпе ҫак ҫӗр ҫинче?
Вӗт ҫӑлтӑр пек хӗм вӗҫнӗҫемӗн
Вӗҫетӗп ӗмӗт тӗнчинче.

Ман вут сыппи сиксе шартлатрӗ,
Хӳтерчӗ ӗмӗт ыйӑхне,
Пӗр алтӑр шыв вута сапатӑп,
Таратӑп мӑн тӑман ӑшне...

***

Хура хӗвел шӑнса пӑрланчӗ,
Киревсӗрлетрӗ илеме,
Хӑрушлӑх пыр тӗпне капланчӗ:
Пурнас килет — пурнас килмест...

Юр мар ҫӑвать, ҫӑвать-ҫке хӑрӑм
Ман пуҫ ҫине, ман ял ҫине.
Эп хӑрамастӑп тейӗн,—хӑрӑн
Курсассӑн вупӑр ташшине.

Ҫӳҫ-пуҫ милке пекех саланӗ,
Ӑс-пуҫ арканӗ кантӑкла.
Курак та мар, ҫӑхан тӑманӗ
Тулта алхасӗ антӑхса.

Эс пурăн, пурăн, пурăн, пурăн,
Ан парăн çеç тискерлĕхе.
Çан хăвăн хĕвелӳ. Эс курăн
Ун йăлтăрти шевлелĕхне.

Вара никам тытса чараймĕ
Чунри пурнаслăх хĕрĕвне,
Тӳпе тăрриллĕн те çĕр айĕн
Хăват пуçтарнĕ чĕрӳне.

**ЫРАПА УСАЛ**

> Но если на крылах гордыни
> Познать дерзаешь ты, как бог,
> Не заноси же в мир святыни
> Своих невольничьих тревог.
>
> **А. Фет**

1

Вăйсăрччĕ эп, халсăрччĕ,
Тĕттĕмрен хăраттăмччĕ.
Мана курайман çынсем
Қаçа хирĕç кашкăр ячĕç...
Қашкăр куçне тухатрăм та
Қаçа çутма çутă турăм.

Вăйсăрччĕ эп, халсăрччĕ,
Ӳкесрен хăраттăмччĕ.
Мана курайман çынсем
Чуна илме çăхан ячĕç...
Çăхан тĕкне татрăм та
Инçе вĕçме çунат турăм.

Вăйсăрччĕ эп, халсăрччĕ,
Хаяртан хăраттăмччĕ.

Мана курайман çынсем
Юплĕ чĕлхе çĕлен ячĕç...
Эп сăннине кăлартăм та
Наркăмăшран эмел турăм.

2

Эс вĕчĕх, кĕвĕç, касăл,
Тарăх — вăй çитсессĕн.
Эс çичĕ йывăç касăн —
Лартăп çитмĕл çиччĕ.

Ытла чее пуласшăн!
Эсĕ — курайманлăх:
Тăп-тăр куна хупласшăн
Явăнтаран çăханлăх.

Çăхан вăйне çĕнмешкĕн
Пулăп-и çăхан эп?
Паян эп — çумăр. Лӳшкĕп.
Çăхансем — пытаннă.

Ыран эс тăвăл ярăн,
Тин пĕтертĕм тейĕн.
Хуралăхна шăтарăп
Эп — хĕвел уриллĕн.

Çапла пурнатпăр эпĕр.
Пурнăç — вăйă евĕр.
Ăшра — чунра — кĕтетпĕр:
Кам кама çĕнтерĕ?

3

Эп хĕвел шевли чухне
Каç пулса эс хăваларăн,
Эп тармашкăн шутламан —
Сĕмлĕхре çеçке кăлартăм.

Çеçкеме хăртас тесе
Шур юрпа мана хупларăн,
Эп шăнмашкăн шутламан —
Шур юртан çитти майларăм.

Ахăр самана пулса
Йăлт тустартăн та аркатрăн,
Эп — çӳлтен, пĕлĕт çинчен
Пăхса лартăм. Мăйăр катрăм.

Сан çине мăйăр хупли
Чул пек шăпăрр! çуса кайрĕ.
Ма эс питĕ тарăхан?
Ху мана кунта хăпартрăн.

«Путса вилчĕ» тесе ан калăр.
Ăраскалăм — пуçламăшсăр, вĕçсĕр...
Çавра кӳлĕ варри — авăр,
Авăртан аçтаха вĕçрĕ.

Аçтаха кӳлĕрен тухсассăн
Вăшлатса пуçăм çийĕн иртрĕ,
Уçăлмашкăн пуçланă сассăм
Хура хум хушшинче çĕтрĕ.

Пулнă — иртнĕ. Нимскер те шеллемĕп.
Халь ăнлантăм: хăть макăр, ан макăр—
Çавра кӳлĕ çинче — шевлелĕх,
Çавра кӳлĕ варри — авăр.

Аçтаха вĕçрĕ, вĕçрĕ пуç çийĕн,
Вут çăварĕ йăлтах кĕллерĕ,
Тăвăлпа тăвăлса килнĕ çиллĕм
Йăвашрах чĕреме тĕреклерĕ.

«Путса вилчĕ» тесе аҥ калăр.
Эп ишме юрататăп — путмарăм,
Эп çунса кăварланнă — çунмарăм,
Аçтаха путнине — асăрхарăм.

❁

Çӳренĕ чух, кунланă чух
Асра тытса тăрар-и, тусăм:
Тул çутинче васкавлăх çук,
Таса та хĕвĕшӳсĕр шуçăм.

Кун-çул иртсен тĕнче пĕтмест,
Тĕнче — юлать, эпир — каятпăр.
Вăл пирĕн инкеке пĕлмест,
Эппин çут тĕнчене ан ятлăр.

Тул çутинче, ир çутинче
Шанчăклăха упратăр куçăм:
Сĕм каçăн тĕттĕм варĕнче
Ялан ӳтленĕ çутă шуçăм.

❁

Шăнтса кĕрхи çилсем вĕрет
Çаралнă уйăм-хирĕм урлă.
Кун-çул пар лашапа çӳрет:
Пĕри — хура, тепри — чăлт-шурă.

Çапах вĕсем пĕр кӳлĕмре.
Шап-шурă пурнăçпа пурнаймăн.
Çапла вăл пулнă. Ӳлĕмрен
Çав çул-йĕрпех кун иртсе кайĕ.

Мĕнех утсем? Чуптарччăр-и!
Эс пĕл: çак хир, çак çил те — санăн.
Инçе кунтан тĕнче хĕрри,
Апла пулсан кулян та савăн.

Шур çилхепе хура çилхе
Яваланса пăтрашнă майăн
Эс, тухнăскер çула пилпе,
Ачу валли Сăмах тупайăн.

Қаçхи тӳпен асамлă уççинче
Сар уйăх тунсăхне валеçнĕ чух
Ял хыçĕнче тăраттăм тăр пĕччен,
Пĕччен пулин те — аслăяхчĕ чун.

Сăвап эп туйрăм — вĕççĕре туйса.
Çавăнтанпа вĕт-шакăр хĕвĕшӳ,
Самантлăх çĕнтерӳ — мĕлке пулса
Çухалчĕ те — çуралчĕ килĕшӳ.

Қавар эп турăм сарă уйăхпа,
Тӳпе хăранине ăнлантăм эп.
Ан тив, кунта çӳрерĕм тунсăхпа,
Қичем мĕнне нихçан пĕлмерĕм эп.

Ыраш шăркиллĕ варкăш хумĕ пек
Çак пурнăç хирĕ урлă ăнсăртран
Қилсе кĕрсе çав ăнсăрт хушнипех
Çухаласса ăнлантăм çав каçран.

Çавăнтанпа пин хут та хаклăрах
Тӳпе пилленĕ вăхăт вăчăри.
Ешер эппин, сукмак хĕрри — хупах,
Юрла, тăри! Қунсем çуталччăр-и...

Этем ури ярса пусман
Вырăнсенче кăпшанкăсем
Кĕшĕлтетеççĕ пуль ялан
Çулçă çине çулçă çинчен.

Турат çинчен турат çине.
Тăшманĕ те пур, тусĕ те.
Тăшманĕ — пĕр-пĕрне çиме,
Туссем — сунмашкăн тӳсĕмлĕх.

Хĕвел хĕртет-и е тĕтре
Ултав мĕлкийĕ хăвалать:
Этем ури пусман çĕртре
Шав пурнăç малаллах шăвать.

Çав курăксем, кăпшанкăсем,
Çав çын ури пусман кĕтес —
Те савăнать эпир çитсен,
Те хурланать?
Ăçтан пĕлес?

Хура та шурă танлăхне
Эс чăнласах пĕлесшĕн-и?
Тĕнче сана вăрттăнлăхне
Тӳлевсĕр парĕ тетĕн-и?

Хура та шурă хушшинче
Инкек-телей те — çурмалла.
Чун çурăлать шарт! варринчен,
Анчах чечек пек çуралать.

Çак самантра эс курăн тин
Çут тĕнчене урăх куçпа.
Кулакансем-и? Кулĕçин.
Эс килнĕ вăрттăнлăх уçма.

Хура-шурна уçса пăхса
Паллаш тĕнче асамĕпе,
Çуркуннепе пӳртрен тухсан
Çак тĕнчене тин курнă пек.

❁

Кĕрхи каçсем ытла салхуллă,
Кĕрхи каçсем ытла кичем.
Чунна пуссассăн тунсăх, хурлăх —
Çĕрле шутла эс ман çинчен.

Кĕрхи çилсен çилли пăчланĕ
Ху кăмăлна хăвах çĕнсен.
Телей пĕтмен, телей пуçланнă,
Шутла, шутла эс ман çинчен.

Таçта пурнать те пĕр вăтанчăк
Нимле ăнкарма çук этем.
Сана, тен, çупăрлĕ çут шанчăк
Çĕрле мана аса илсен.

Вара салху иртсен вăраххăн
Ыталĕ тĕлĕкĕн ырри...
Кула-кула ирпе вăратĕ
Мачча çинчи шевле сарри.

*

Çынсем хĕрсе туй тунă чух,
Урай хăми чĕтреннĕ чух
Тарса тухса хавас туйран
Çӳрерĕм эп таса уйра.

Йĕркен-йĕркен килет сăмах.
Мĕне хурам-ши эп чăна?
Е ташлакан тĕнче — чăнни?
Е асăмри тĕнче — чăнни?

Туйра хаваслă та кичем.
Уйра салхуллă та — илем.
Килет те кĕвĕ пуçăма—
Эп хампа хам та хуçа мар.

Ку — манăн çул, ку — ман кун-çул.
Тавах турра: ман айăп çук —
Поэзирен чăнрах тĕнче
Эп тупаймарăм çĕр çинче.

*

Тин кун-çул каларĕ: Ывлăм!
Çут тĕнче тинех юравлă.
Сивĕ сывлăш. Сивĕ сывлăм.
Кăмăл — кĕмĕл пек янравлă.

Килчĕ тул çути кăваккăн,
Ĕмĕтри сенкерлĕх килчĕ!
Лăштăр пулнă ман хăватăм
Çĕнĕрен — савса!—вăй илчĕ...

...Кĕре юлнă ăнсăрт кайăк
(Тав тума та пĕлейместĕп!)
Çаврине юрланă майăн
Мĕн тери пурнас килеслĕ...

Сывлăх пултăр. Пултăр юрă.
Сивĕ сывлăш. Сивĕ сывлăм.
Юлашки саву. Эй, туррăм,
Тивĕç марччĕ — тивĕç пултăм...

*

Хурăнлăхра куккук сасси.
Кам шăпине автатăн-ши?
Куккук! Элир пурăнасси
Мĕн чухлĕ-ши, каламăн-ши?

Хурăнлăхри куккук сасси
Каять тĕнче уçлăхнелле...
Телейлĕ чух ман шырас-и
Татах та урăх телее?

Телей вăл — пурнăç. Урăх çук.
Кулянăпăр эппин кайран:
Тĕнче уçлăхĕпе куккук
Калаçнине илтми пулсан.

*

Ку телейлĕ çула
Çăмăлпа утма çук,
Çил улать, çил улать —
Чăлханать утма çул.

Çĕр çинчи сукмаксем
Çĕтрĕç шурлăхалла...
Манашкал ухмахсен
Уçлăха тухмалла.

Çăлтăрсем хушшипе
Вирхĕнсе пынă чух
Чун-чĕре хушнипе
Хывăнать çĕнĕ çул.

Ма тесен ĕмĕртен
Сăвăç — çул хывакан,
Эсĕр вăхăт иртсен
Çав çулпах пыракан.

Çут çанталăк тĕлĕрсе тăраннă,
Пухăнать çĕн вăй — ыратуран...
Пăр каясшăн, мелсĕр купаланнă
Пĕр катрам çине тепĕр катрам.

Пăр каясшăн. Эсĕ тăрса юлăн
Çыранта шухăшупа супса.
Ак хускалчĕç харсăр, пăтрашуллăн,
Антăхса, пĕрне-пĕри пусса...

Чун хăравĕ, аркану хавасĕ,
Иртнĕ хĕл, килес çулхи кунсем
Чĕрене пыра-пыра çапаççĕ,
Чĕтренеççĕ туйăм каштисем.

Ним те ăнланми пăхса тăратăн,
Çĕр хытти кăна ўкме памасть,
Нишлĕхе пăрпа лартса яратăн
Паянтан хăюллăрах пулма.

Тарăху канаш параймĕ.
Килĕр, килĕр, акăшсем!
Аслине эп манса кайнă,
Сырнă вĕтĕ шухăшсем.

Шур çунат вăшлатнăçемĕн
Çĕр çинче те пуç çинче,
Тарăху саланнăçемĕн
Тин çуталĕ сан тĕнчӳ.

Акăшсем мана чĕнеççĕ
Илĕртӳллĕ ирĕке,
Тасатаççĕ те чӳхеççĕ
Чуна ларнă кирĕке.

Татăлаççĕ ластăк-ластăк
Тăлăсем — çĕлен-калта:
Пусăм турăн. Хăрамастăн.
Акăшсем — малта.

Ват йывăç ас илтерчĕ пурнăça:
Авалхине тата пулассине.
Чӳкленĕ пулĕ эпĕ йывăça —
Çук! Пуç çапман суя турăшсене.

Вĕсен ытла та ĕмĕрĕ кĕске,
Сăвапĕ — хырăм тирĕ хулăнăш.
Вăл «ырлăха» ирттертĕмĕр тӳссе.
Эй, пурнăç, пурнăç, пурăнăç...

Йăлтах — самантлăх,
Йăлт — йăпăртлăха,
Пĕлместĕн эс: мĕне ĕненмелле?
Хĕвел анать.
Ыран татах тухать,
Илсе килет пире валли шевле.

❁

Санăн умна чĕркуçлентĕм, Тур амăшĕ!
Çылăхлă пулчĕ пуль çул.
Ырлăх-и, хурлăх-и, чыслăх-и, намăс-и —
Урăх кун-çул манăн çук.

Урăх çĕр-шывăм та, урăх тăванăм та,
Урăх юлташăм та çук,
Урăххине ĕлĕкрех шырамарăм та —
Халь тин шырассăм та çук.

Тавăм кăна — хĕвеле туйма панăшăн,
Е — сĕм каçа — чăтма.
Халăхăн савăкĕ, халăхăн намăсĕ —
Пултăр эппин вăл — ман.

❁

Çут тĕнчере тек ним те çук пекех...
Пĕр çак уçланкă-тĕлĕнтермĕш çех,
Пĕр çак хĕвел те çак хитре чечек,
(Пĕр телейӳ те варкăшла вĕçет...)

Уçланкăра тасалăх çуралать,
Кăвак тĕтреллĕ нӳрĕк сайралать.
Эп каламан ăна: «Кам мĕн шырать,
Çавна тупать». Эп ак уçланкăра.

Выртса сăнатăп хурăн çырлине,
Вăл — илнĕ те хĕвелĕн шевлине,
Вăл — илнĕ те хĕвелĕн хĕрлине —
Пире те хăй пекех пулма чĕнет.

(Пĕр телейӳ те варкăшла вĕçет...)
Мăн Уçлăхра — сан уçланку çиçет,
Унта çырла — Хурăн Çырли — пиçет
Çут тĕнчере тек ним те çук пекех...

Тӳпе инçечĕ хĕсĕнет,
Тип вар пек курăнать мăн Атăл...
...Утас сукмакăн çăмхине,
Шăпам, мĕн-ма чăлхантаратăн?

Салта-салта тĕввисене
Эп ывăнтăм. Ăçтан вăй тупăп?
Тухам-и урăх çул çине?
Çук — урăххи. Пурри те — хупă.

Эс çеç, поэзи, ман хăват —
Çул чăлхансан ална тăсатăн,
Вара каллех тӳпе — кăвак,
Каллех мăн тинĕс евĕр Атăл.

Утатăп хыççăн... кĕперпе...
Ку... асамат каççин илемĕ...
Çĕрте çĕтсессĕн тӳпепе
Утма пире турри пилленĕ.

Керменĕм тăрринче — хĕвел,
Сулахая пăхсан — юманлăх,
Алкумĕнче — хитре пĕве,
Сылтăм енче — чечен çăкалăх.

Епле аван керменӗм пур!
Тӗттӗмленсен пӗр ушкӑн ҫӑлтӑр
Мачча ҫине тухать маттур —
Пулин ҫӗрле, ыр ӗмӗт пултӑр!

Вара эпир санпа, савни,
Киленӳпе ларар пӗр хушӑ...
...Керменӗм пирӗн — тур пани,
Епле вӑл пирӗнсӗр пуш-пушӑ!

Ача ҫӳретӗр выляса,
Чӗкеҫ чӗппи пек чӑвӗлтеттӗр...
Керменӗм пирӗн — тап-таса,
Ҫавӑнпала эпир — пӗтместпӗр!

*

Шӑпчӑка — тӗлӗксем ӑшӗнчи канлӗ каҫ,
Тӑрие — ҫӗрпе пӗлӗтӗн савӑклӑ туслӑхӗ.
Тен, пурне те хаваслӑ пулма юрамасть?
Ман валли — ҫут тӗнчен таса тунсӑхӗ.

Ах, епле пӗлӗтсем аялтан-аялтан
Шӑвӑнаҫҫӗ... Салхулӑх ҫӑвать вӗтӗр-вӗтӗр.
Эп пин хут тухса кайрӑм кичем ҫак ялтан,
Пин пӗрремӗш хутчен таврӑнатӑп ак чӗмсӗр.

Аслӑрах тӗнчере — тунсӑхсем аслӑрах,
Хурарах ҫӑхансем пуҫ ҫинче шуххӑн явӑнчӗҫ...
...Хама хам ҫухатса хам сисмесӗр — сӑртра
Эп тӑратӑп иккен. Айлӑмра — тӑван ялӑмҫӑм.

Ялӑм! Эсӗ пурри — эпирех те пурри.
Сансӑр эпӗр — ҫу каҫӗсӗр шӑпчӑкӑн ҫуклӑхӗ,
Сансӑр эпӗр — тӳпесӗр те ҫӗрсӗр тӑри.
Эс упратӑн мана — ҫут тӗнчен таса тунсӑхӗ.

Çăварне карать кĕр каçĕ,
Калăн: кашкăрăн çăварĕ...
Турăçăм, пире упраччĕ!
Çĕрĕпех мăрье уларĕ...

Каллĕ-маллĕ уткалатăп,
Шыв ăсса ĕçетĕп алтăр,
Лăпланма пултараймастăп,—
Каçĕ кашкăр пулчĕ ахăр.

Чĕрене çурса тулларĕ.
Ме, тулла, тек шеллеместĕп.
Çăткăнна эс, тен, тултарăн,
Хаклă çыннăма тивеймĕн...

Ыр çынсен куççулĕсем юхаççĕ,
Ма — юхсан та — пит çине тухмаççĕ?

Ах, вĕсем тумлаççĕ, курăнмаççĕ,
Ма тесессĕн чун тĕнчи — унта-çке,

Кунта мар.

Кунта — ӳт-пӳ асапĕ,
Хĕвĕшӳ те тĕркĕшӳлĕх чапĕ...

Хум çине ӳкерĕнет кун-çулăм,
Чун çине тумлать, тумлать куççулĕ—

Инçетре те çывăх — Çăлтăр çулĕ...

Ах, чунăмçăм, чунăм — тăри!
Тӳпе тăррине тĕрлекен.
Тӳпе тăрринче — ялтăри:
Сенкер те, кăвак та кĕрен.

Унта — вĕçсĕр ирĕк, илем,
Унта — сăмахсен çеçкисем,
Унта — турă панă хĕлхем,
Хĕлхем чун ăшне вĕçнисем...

Пĕр вырăннăн тăнă тăри
Çĕре ӳкнине çиçĕм пек
Курман та-и, тен, хăш-пĕри?
Эп курнă — эп хам çавăн пек.

Ах, чунăмçăм, чунăм — тăри!
Çӳлтен — çĕрелле. Е çĕртен —
Çӳле! Ма пилленĕ турри
Мана чĕрĕ тамăк-илем?

Вĕçевĕмпеле ӳкӳпе
Эп нимĕн те, ним те пĕлмес:
Те йышăнĕ çĕр, те тӳпе...
...Қаçар, чун савниçĕм-чĕкеç.

Епле çут çанталăк хитре!
Вун çич çулхи хĕр пек хурăн.
Чунна тĕтĕрсессĕн тĕтре,
Çак хурăн ырришĕн — пурăн!

Пуласшăнччĕ эп çынсем пек...
Пуласшăнччĕ те — пулаймарăм.
Ăшри çутăпа, сĕмпе
Такам кун-çула асамларĕ.

Усал тата ырă чикки
Чĕре варрине çиçĕмлет-мĕн.
Ай, хурăн! Савни! Пирвайхи...
Пĕлетĕп, мана эс пĕтермĕн.

Мана эс ӳкермĕн çĕре,
Сана ыталатăп, чиперĕм...
Епле çут çанталăк хитре!
Мĕн-ма пурăнмашкăн пĕлмерĕм?

Эп — çумăр тумламĕ анчах...
Кăвак çутăпа килнĕскер,
Кĕрхи çулçăпа йăпанса
Çав çулçă вĕçне ӳкнĕскер.

❁

Эп — çумăр тумламĕ анчах...
Илем сӳннине сăнакан:
Никам та мана ăнланман,
Ăнланмĕ те савмĕ никам.

Эп — çумăр тумламĕ анчах...
Ах, чунăм халь-халь ӳкесле,
Е кĕр сиввипе пăрланса
Шăрçа пек йăл-йăл çиçесле...

Эп — çумăр тумламĕ анчах...
Эп килнĕ курма тĕнчĕре,
Сире ырлăх-сывлăх сунсах
Ӳкмешкĕн, ӳкмешкĕн çĕре...

*

Нихăçан кунашкал ăшă çумăр çуман!
Пуç çинчи çиçĕмсем хĕç хăйраччăр.
Никама та эпир санпала хур туман,
Çиçĕм айĕн утар хăрамасăр.

Пĕчĕкле утнă пек, пĕчĕкле чупнă пек
Шыв кӳлленчĕксене уямасăр,
Пĕр кулса-шӳтлесе йĕп-йĕпе пулнипе.
(Йĕпеннишĕн юлар-и хавассăр?)

Нихăçан кунашкал ăшă çумăр çуман.
Çав ачалăхранпах вăл çуман-тăр?
Ĕнтĕ халĕ пире нумаях кирлĕ мар:
Утаясчĕ пĕрле. Çумăр — çутăр.

*

Ăмăрткайăк шăна тытмасть
Е — чăх евĕр — çĕре выртмасть,—
Вăйлă тăвăл килсен — çĕкленет.

Çĕкленет тӳпере савăнма,
Сывлăш хумĕ çинче ярăнма,
Ирĕкли — ирĕке юрататъ.

Пурнăç тупсăмĕ мĕн? Кам пĕлет?
Ăмăрткайăк вĕçет те вĕçет
Хĕвелпе хура çĕр хушшинче.

Тăвăла Нимтеçуклăх çăтать.
Ĕнтĕ çĕн куракссем те шăтать,
Ăмăрткайăк патне! — çĕкленме...

Тепĕр чух тата пулаççĕ
Пархатарлă, шеп кунсем:
Варкăшпа вăйă выляççĕ
Ачаш симĕс хурăнсем.

Хĕвелпе типет çĕн утă,
Ырă шăршă — тавраллах.
Талпăнать чун-кăмăлу та
Варкăшпа ăмăртмалла.

Пĕр самант туйса илетĕн:
Эсĕ — хурăн, эсĕ — уй...
Нихăçан та эс вилместĕн,
Çын вилет тени — пустуй...

Кaç витĕр тухмасăр туймашкăн пулать-и
Чуна çутă кĕнĕ чипер саманта?
Кĕрхи вăрманта — сарă çулçă пылакĕ,
Салхулăх уявĕ — кĕрхи вăрманта.

Эс çеç чун çутиллĕ, телейлĕ, хаваслă,
Эс çеç, тăлăхскер, тăванлашнă паян:
Шур ĕмĕт çитеслĕ, тасалăх анаслă
Çӳлти аслă-аслă тăван уçлăхран...

Тен, çулçă та мар, сыв мару вĕтĕр-вĕтĕр
Кив кăмăл турачĕ çинчен тăкăнать?
Утса эсĕ тухрăн кĕрхи каçсем витĕр
Кĕмĕшкĕн çĕр юрлă, ялтравлă куна.

*

Эп пĕлместĕп: мĕскершĕн таса чечексем
(Юрататăп — сенкер тĕслине...)
Тĕнчене килнĕ чух — чĕре витĕр — чиксе!—
Чĕре витĕр — çурса!— килнине.

Çав сенкер çулăмпа çунса курнă чĕре
Канлĕрех сукмаксем ыйтнă чух
Пăрăнас та тесеччĕ, анчах тӳремре
Эп саван чечексен сăнĕ çук.

Çавăнпа шăпамран эп тараймăп нихçан.
(Кирлĕ мар: ырлама, хурлама...)
Чечексем чĕре витĕр, чун витĕр шăтсан
Чечекрен хăптараймăр çынна.

Хĕрлисем. Саррисем. Чăлт шурри. Сенкерри.
Сăрхăнать çĕр çине асамат...
Савăксенĕн ырри, хурлăхсенĕн йĕрри
Пурнăçа тĕрлесе асамлать...

*

Чиркӳ никĕсне янă чул палăксем
Тăпра ăшнелле путаççĕ.
Вĕсем — çур кунне кĕтекен вăрлăхсем —
Çĕре пăрахсан — шăтаççĕ.

Чул палăк çинчи чăвашла сăмахсем,
Курсам: çеçен хир кăлканĕ,
Илтсем: тӳпере вăшлатан çунатсем,
Туйсам: мĕн калать вăрманĕ?

Эпир — çут çанталăк, эппин, вăл пĕтсен
Сăмахăмăр та çухалĕ.
Чул палăкăм — никĕс; чиркӳ стенисем,
Тăрри — вăхăтпа çуркаланнă...

Çапла тĕпренсе арканать палăксем,
Анчах пурăнать чăваш! Пур!!!
Эпир — çут çанталăк, эпир — халăхсем,
Ӳксен те — шăтса
Тухатпăр...

Вăраххăн уçăлать тĕллевĕм,
Сăпайлăх та, сăвап та пур:
Темле таса-таса тĕн евĕр
Чуна чĕртет пĕрремĕш юр.

Ачашшăн пирĕшти юрлать-и
Çӳлте, юр пухăннă çĕрте...
Шап-шурă йывăççу ларать-и
Çул кукринче. Чунра вăл, тен?

Сăнсем çуталнă, ырăланнă,
Иртет кĕр, пылчăк та типет.
Ăçта хаярлăх пуç кăларнă,
Унта халь шурă юр ӳкет...

Эс тухрăн савăнăç хирне,
Эппин хаваслă пул!
Çĕн юр çинчи мулкач йĕрне
Вула та — ăшшăн кул.

Ҫĕн юр ҫинчи ҫут кĕмĕле
Ăша хывса упра.
Тав ту ăвапла хĕвеле.
Хĕвел кăна — тупра.

Эппин йăпан пурнăҫпалан,
Ҫак хир пек аслă пул.
— Ҫулу халь ĕнтĕ ăҫталла?
— Хăех пĕлет вăл, ҫул.

❁

Савнă вăхăт манăн — каҫ пултти,
Е — хĕвел тухас чух — илĕм-тилĕм.
Ĕнтĕ эп улшăнаяс ҫук халь тин:
Ҫунпа каҫ хушши — ман тăван килĕм.

Эп юри асамлăх шыраман,
Асамра иртет пĕтĕм кун-ҫулăм.
Ыр туни те, ҫылăхăм та мар:
Ик тĕнче хушши — тăван ҫĕр-шывăм.

Чупрĕ-чупрĕ, чупĕ ман сукмак
Ҫырмасем, хирсем, пĕлĕтсем урлă...
Пурнăҫăм ҫитмест — вĕҫне тухма:
Ҫĕрпеле тӳпе хушши — ман пурнăҫ.

Эпĕ — чун тĕнчин ҫул ҫӳревҫи —
Пĕр мĕнле ҫуралнă, ҫапла вилĕп...
Ҫам сире ман пек ытарĕ-ши:
Пĕлĕтĕм, тăван ҫĕр-шывăм, килĕм?

*

Темех мар усал ҫыннӑн хурлавӗ,
Юратуллӑ килни — юратать.
Шӑнкӑр-шӑнкӑр тӳпе шӑнкӑравӗ
Йывӑҫа-курӑка вӑратать.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр тӳпе шӑнкӑравӗ
Ыйхӑран вӑратать чунсене...
...Анӑҫа тухӑҫ тейӗҫ, ултаӗҫ,
Ан итле, ан итле вӗсене.

Ҫашкӑрсем сурӑх тирӗ пӗркенӗҫ,
Ҫӗнӗ «ирӗклӗх» сӗнӗҫ сана,
Эсӗ ҫеҫ, тӳпене тимлекенӗ,
Чӑн-чӑн ирӗк мӗнне ӑнланан...

*

Ик енӗ — чечеклӗ те капӑр,
Ҫӳлте — аслати сӑмахсем...
Ҫыран хӗррипе кукӑр-макӑр
Чупаҫҫӗ вӗлт-вӗлт сукмаксем.

Чупаҫҫӗ вӗсем, чупнӑҫемӗн
Хирпе вӑрмансем витӗрех
Пӗрре юпленеҫҫӗ ҫӗр тӗрлӗн,
Тепре ҫыхӑнаҫҫӗ пӗрле.

Сукмак хулана кӗрсе кайрӗ...
Тӳрленчӗ проспект йӗрӗпе,
Хуҫлатрӗ квартал тӑваткалӗ,
Ҫавралчӗ скверсен ҫаврипе.

Хĕвел анăçа пусăмланă,
Пăхса хулана хурланать:
Сукмак стенара бетонланнă —
Шăмми-шакки çеç курăнать.

Эс тупнă утрава хаярлăх пуçлĕ
Хăрушшăн çунтарма та аркатма...
Чун утравне Америка пек уçмăп.
Веспуччи мар эпĕ, Колумб та мар.

Ыр ĕмĕтпе тет тамăка çул хывнă...
Утравăмра эп лартрăм çутă Храм,
Илемлĕх туррине сунасшăн сывлăх
Йăл-йăл кулса кĕрейрĕм алăкран.

Ура хуçса, шăлне йĕрсе тирпейсĕр
Алтарь çинче Киревсĕрлĕх ларать.
Романтик пурнăç йĕркине пĕлмесĕр
Хаяр валли-ши храм лартса парать?

Хытса тăратăп. Шухăш шухăшлатăп:
Епле кӳршĕлĕхе хăнăхмалла?
. . . . . . . . . . , . .
Храмра — Усал. Мĕнле пурăнмалла?

Кĕмсĕр-кĕмсĕр туса аслати арканать.
Ял хыçне тăкăнать вут кӳме юлашки...
Çиçĕм çиçрĕ кăна, çумăр çурĕ кăна —
Урăх ним те пулман, паллă мар пуласси.

Çиçĕмсен çутинче курса юлтăм кăна:
Çул выртать анатла, çул выртать тăвалла.
Кĕмсĕр-кĕмсĕр туса аслати арканать,
Чупăмран çул тухать, катара çухалать...

Мĕн кĕтетĕн эс, ăнтăлатăн эс?
Ма сана питĕ кирлĕ çут шанчăк?
Тӳпере чӳхенет туйăнми варкăш çеç,
Сывлăшра — сисĕнми йăсăрланчăк.

Ыйăхри пекех, тĕлĕкри пекех
Çыннисем курмăш-илтмĕш çӳреççĕ.
Çут çанталăк шăпах. Темскере вăл кĕтет.
Те чутлать пăталу хĕресĕ?

Те вутпа шыва, ăшăпа сивве
Хатĕрлетпĕр эпир çĕн талайлăх?
Алăсем хыпашлаççĕ кăварлă хĕве,
Тен, эп çылăх мĕнне манса кайнă?

Мĕн кĕтет пире, çав кĕтет пире...
Авă пĕлĕт хĕрри те сăрланчĕ...
Юрататăп ире, ирĕк-ирĕк хире,
Сывлăшра сисĕнет йăсăрланчăк.

Каçатăн-и чечеклĕ улăх урлă,
Тухатăн-и хаваслă уй-хире,
Çулу пĕр ятлă, ячĕ унăн — пурнăç.
Мĕлкӳ санран хăпа пĕлми çӳрет.

Таса та тӳрӗ эс утма шутланӑ.
Вӑл — упаленӗ — тӗксӗм-ирсӗрскер...
Картран тухса хаярланса шӑртланӑн,
Ху мӗлкӳпе кӗрешӗн эс тискер.

Хӗвел ансассӑн тин ӑна ҫӗнтерӗн,
Ял еннелле уттарӑн савӑнса.
Ах, ывӑнтӑм, тинех тасалтӑм тейӗн,
Анчах ан пӑх калла эс ҫаврӑнса.

Ялу ҫинче ҫуталӗ ылтӑн уйӑх.
Сар ҫутӑ ӳкӗ сумсӑр кантӑкран.
Ан ҫавӑрӑн!
Хыҫра — арҫури туйӗ:
Вун ик мӗлке!
Вун иккӗшӗ те — сан!

*

Пӗр талӑк хыҫҫӑн тепӗр талӑк...
Лачакана йӑлт ҫаврӑнчӗ...
Йӗрсе тӑранчӗ те ҫанталӑк —
Салхуллӑ ҫумӑр чарӑнчӗ.

Малта мӗскер? Тӗтреллӗ, нӳрлӗ
Ҫул-йӗр. Тӳпе те — пылчӑклӑ.
Йывӑҫӑмсем кӑна тӳп-тӳрӗ,
Пурнас хавасӗ — пысӑккӑ.

Йывӑҫӑмсем! Йӗпе-ха тумӑр,
Час типӗр... Шухӑшлӑр вара:
Мӗн-ма салхуллӑ ҫунӑ ҫумӑр
Тымарсене сӗткен парать?

*

Юрлать юррине шаланкă —
Юрри пĕр хĕрхӳ, пĕр хĕрӳ.
Вăрман варринче уçланкă,
Унта — хуп-хура ут кĕтӳ.

Ҫашнин раскалне — урхамахĕ,
Вĕçеççĕ хура çилхисем...
Тĕреклĕ-и эс е чăлах-и —
Пурне те пĕр пек элчелсем.

Вăл килĕ — элчел урхамахĕ
Сан сарă кунна таптаса.
Пулин пурнăç тертлĕ — юмах вăл.
Пурнар-и эппин йнтăлса.

Юрлать юррине шаланкă.
Ҫикен курăксем. Сар пуçсем.
Тĕмсем. Йывăçсем. Уçланкă.
Сана сăнакан куçсем.

*

Ҫĕрхи вăрмана кĕрсе кайрĕ сукмакăм.
Вăрманĕ — чĕлхесĕр те чĕмсĕр, пĕр сассăр,
Сăмахĕ вĕçленнĕ ун, пĕтнĕ юмахĕ,
Пире тек каламĕ.
Ҫаçар — пултарсассăн.

Куçа курăнман эрешмен картисем çеç
Ман утăмсене кĕскетесшĕн, чарасшăн.
Хальхи çамрăксем кулянмашкăн пĕлмеççĕ.
Сана — кулянтартăм.
Ҫаçар — пултарсассăн.

Вăр-вăр çил-тăманлă та шарт шартламаллă
Хĕл кунĕсем çитĕç чуна пăрламашкăн,
Юр çийĕн йĕр хывăп кайлă та майлă
Сукмак тупаймасăр.
Қаçар — пултарсассăн.

Қаçар — пултарсассăн,
Мансам — каçарсассăн.
Сан хурлă куçна хавасма хĕмлеймерĕм...
Мана чăтлăхри сукмаксем йыхăраççĕ.
Ман урăх шăпа.
Урăхла ман телейĕм.

*

Эй, ват ăшши! Хĕвел çути,
(Çу кунĕнчен тарса тухни?)
Йăмра çулçи, йĕлме çулçи
Вĕлтĕртетсе йăлтăртатни.

Тек ним те çук. Йăлтах — шевле:
Қун витĕр кун, чун витĕр чун,
Кĕркуннене эс ан шелле:
Уяв хавасĕ хăйĕн ун.

Эс хăвна ху та ан шелле,
Çеçки те пулчĕ, пулĕ юр.
Вĕçет чуну çӳле-çӳле,
Эппин вĕçме сăлтавĕ пур.

Эппин хура кĕр — тертӳ мар,
Шевле вăйне ăнланни çеç.
Ӳкет çеçке, хунать тымар,
Тĕнчемĕр — Турă умĕнче,

Пĕрремĕш хут юр çунине
Курнипеле ăшталануçă
Çерçи чĕппийĕсем умне
Кĕрпе сапатăп ывçăн-ывçăн.

Хĕл ларнинче тасалăх пур.
Хăрав та пур — чĕпĕ пулсассăн:
«Тĕнче пĕтет-ши?»—теççĕ пуль
Хура çĕр-шыв шурра куçсассăн.

Пире суккăрлăхран çăлать
Пурри-çуккин ылмаш ик енĕ:
Чечексĕр чух — куç уçăлать,
Килет чечекĕн чăн илемĕ.

Кĕркунне. Купăста каснă вăхăт.
Сывлăш — пăр пек — таса.
Пахчана васкамасăр тухăп
Хампа хам калаçса.

Акă çу иртсе кайрĕ тейĕп
Шăн çĕр çийĕн утса.
Юлашки пан улми пат! ӳкейĕ
Шухăша татса.

Ан кулян вăхăт час иртнишĕн,
Пурăнни — паха.
Кăвакарнă юманлăх çийĕн
Ăраскал пăхать,

Сĕрме купăс çемми. Тӳпери хĕлĕхсем
Иртнĕ кун хурлăхне-хуйхине çĕнтерни-ши?
Тĕлĕнсе каймалла! Тĕттĕмри тĕлĕкрен
Вăранатăн та — чун çӳçенет пурăннишĕн.

Пурнăç мар, пурнăç мар — шурлăх мурĕ кăна!
Эс епле-ха, айван, ултава уйăрмарăн?
Ирĕк, ирĕк тесе — ирĕкпех тыткăна —
Ҫăшт кăна — ху чунна — Шуйттана сутаймарăн?

Турă мар тăк — Шуйттан!
Юпленет иккен çул.
Вăранатăн хуллен, кĕтнĕ-кĕтнĕ шевлеллĕн...
Тек санра курайманлăх та, нишлĕх те çук.
Сĕрме купăс çемми çеç: шеллевлĕ, шеллевлĕ.

Ҫĕленче ăшĕнчи джинн пекехчĕ
Палăри-палăрми чун (асапчĕ!),
Ҫаланман туйăмсен фейерверкĕ
Уйăх тепĕр енне хĕм сапатчĕ.

Йăсăрланчăк, йĕпхӳллĕ сĕм витĕр
Тахçанхи, ĕлĕкхи, авалхиллĕн
Шурă пăс та тĕтре вĕтĕр-вĕтĕр
Явăнатчĕ савусăр, сивпиллĕн...

Никамран та, нимскер те ыйтмасăр,
Джинн хуçи пек, хăюллăн, хавассăн
Утса пытăн, тухатрăн сăмахсăр
Чунăма ирĕке кăларасшăн.

Акă — эп. Акă — эс. Акă — сисĕм.
«Мĕн хушатăн, хуçам?»—тееймĕп.
Пĕтĕмпех шута илтĕн, савниçĕм,
Джинĕ ку пăхăнмасть.
Пĕлеймерĕн.

❁

Мана эс кирлĕ. Мĕншĕнне пĕлеймĕп.
Тен, юрату ку,
Тен, савас килни?
Эс кам-ши ман? Инкекĕм е телейĕм?
Ҫирлех те мар пуль вăхăтсăр пĕлни.

Мана эс кирлĕ халь. Самант курасчĕ
Ёненĕç, шанчăк кӳрекен сăнна.
Ем-ешĕл йывăç тăррисем хуплаççĕ
Паркри кăшт сулхăнрах аллейăна.

Мана эс кирлĕ. Вăрттăн утса тух-ха
Çак кукăр-макăр каврăç хыçĕнчен.
Ма кĕтнĕ чух виç утăм та—пин çухрăм?
Ыталану та — Уçлăх пек инçе?

❁

Шухăшлассăм килмест тĕксĕм кунăм çинчен,
Пурăнассăм килет çакă çутă каçра,
Ыталассăм килет йăрăс пилĕкӳнтен.
Шăпчăксен тĕрри çеç — санпа ман хушăра.

Çурхи каç шăпчăксем тĕрлекен тĕлĕке,
Тĕлĕкри эрешсен вăрттăнах тупсăмне
Эс мана ăнлантартăн, асамлă пике,
Çĕнĕ уйăх кăлартăн сукмакăм умне.

Шăпчăксем тĕрлени — ĕмĕтрен хитререх,
Хурапа шурă мар — çитмĕл çичĕ тĕсрен...
Çĕнĕ уйăхла каç çуралать çĕн чĕре,
Юррăмсем тухса тарчĕç чунри читлĕхрен.

Çавăнпа шухăшлассăм килмест хам çинчен,
Пурăнассăм килет çакă çутă каçра,
Шăпчăксен тĕрринчи тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕссем
Чунăмра, юнăмра, ăсăмра, асăмра...

Хăраттăм сан куçун тинĕсĕнчен,
Куллун илĕртĕвне хуплаттăм.
Саваттăм та — тĕпренчĕк юлмиччен
Савман. Çухаласран хăраттăм.

Айван этем! Сенкер тӳпе хуçи,
Эп хама хам пĕр шелсĕр пăталанă.
Телейĕм те — çĕрпе тӳпе хушши —
Нихçан çитмеслĕн кăвакарнă.

Мана чĕнетчĕ ирĕклĕх, инçет.
(Чун тĕрминчен эп тапаланнă!)
Юратрăм та — тĕпренчĕк юлмиччен —
Тинех ирĕклĕхе ăнлантăм.

(Картлашка умĕнче — шăнăр курăкĕ,
Картапа юнашар — чей курăкĕ...)
Араскалăм-ши ман эс е урăх-и,—
Пурăнсан, пурăнсассăн — курăпăр.

Кётсе ывӑнчӗ пуль пире килӗмӗр,
Кил хушши кавирне сарса хучӗ-тӗр.
Эпӗр ҫитӗпӗр, калӑпӑр: «Килтӗмӗр!»
Калинкке алӑкне савса уҫӑпӑр.

Куллупа пӳрт ӑш-чикки ҫуталӗ те
Ӑшӑма ӑшӑ кӗрӗ, ыр кӑмӑллӑх.
Пултӑн ман — кӑҫалхи ҫулталӑкӑм.
Илсе килтӗн ман ятлӑх та ҫӑмӑллӑх.

Йывӑрне манӑҫа сирсе хурӑпӑр,
Ҫӑмӑлне чун варне лӑпкӑн хурӑпӑр...
...Ёмӗтре те халь ман — шӑнӑр курӑкӗ,
Тӗлӗкре те халь ман — чей курӑкӗ.

Кас-кас ачашлать, хыпашлать ҫил-вӑрманҫӑ,
Ҫӳрет йывӑҫран йывӑҫа юмласа...
...Итлеҫҫӗ — илтмеҫҫӗ, пӑхаҫҫӗ — курмаҫҫӗ
Этем тӗнчине
Кашлакан юмансем.

Хӑйсен — асапланӑвӗ, савӑкӗ, чунӗ.
Хӑйсен — сиввисем, хӑйсен — ӑшшисем.
Ҫынпа йывӑҫсем яланах ҫума-ҫумӑн —
Ах, пурӑннӑҫем! — инҫерех хушшисем!

Ӑнланчӗҫ пуль терӗн-и, кӑмӑл кӳтсессӗн,
Выртсах ӗсӗклерӗн — чарӑнайми...
...Пӑхаҫҫӗ — курмаҫҫӗ, итлеҫҫӗ — илтмеҫҫӗ,
Чунна уҫни ҫеҫ ӗнтӗ. Улталанни.

Тем пулмĕ-ха тетпĕр. Çынсем те ав тетпĕр
Сутаççĕ чунне, намăсне-симĕсне...
Пиртен пулаймасть: çĕрĕпех ӳкĕнетпĕр,
Ĕçетпĕр каçсен йӳçĕ наркăмăшне.

Тĕнче супнине ыр çынсем ан курайччăр
Тесе ыр çынна час илет-ши турри?
Хаярлăх, тискерлĕх, ултавлăх кăвайчĕ
Çĕре çунтарать. Ķĕлленет чун пурри.

Халь ĕнтĕ сăмах ăнлантармĕ ниме те...
Ман ĕмĕрĕм сăнĕ — эсрел сăнлăнах...
Çапах çĕрлехи çилсене эп итлетĕп:
Тӳпе тăрринчен анас пек Чăн сăмах.

Юр çине хăй сăнне кĕренлерĕ те март,
Тӳнекен тӳпене килес кун тĕкĕ пачĕ...
...Те юратăвĕ халь ĕлĕкхи пекех мар,
Те чĕрем шартлама сиввипе халсăрланчĕ.

Тем те пулĕ кайран (пĕр Поэт калашле...)
Халлĕхе — кĕрен юрăн хытти кăчăр-кăчăр,
Халлĕхе — çерçисем тĕлĕнсе калаçни,
Халлĕхе — чунăма янратан чăнкăр-чăнкăр...

Сан сăнна, чиперккеçĕм, манатăп пулас,
Ķуллуна ас илме тăрăшатăп салхуллăн.
Йăлтăр-йăлтăр çиçсе кĕренленчĕ тулаш,
Ķĕртсем витĕр — мартра — курăнать ешĕл улăх.

*

Çутă кун çĕр питне чуп туса
Улăх çийĕн салатрĕ ачашлăх...
Тӳпери тăрие тус туса
Йыхравларĕ мана та малашлăх.

Эпĕ утрăм. Ир витĕр. Каç витĕр.
Çынсемпе ушкăнра та — пĕччен...
Мĕн шыратăп? Çавна та пĕлмесĕр
Ма пурнатăп? Пĕлме те пӳрмен...

Ăраскалăм ман çĕмĕрт пек çутă.
(Çĕмĕртсем çурăлсан — сивĕтет...)
Телее тытасси шăп пĕр утăм
Юлаять те — телейĕ çĕтет.

— Ах, телейĕм! — теместĕп сана,
Телейрен аслăрах савнă çыннăм,
Эп утни те — пĕр саншăн кăна,
Çĕмĕртсем çурăлсан тупнă чунăм...

*

Ӳхĕ мĕн ӳхлетнине
Эп сире ăнлантараймăп.
Чăтлăхра çĕтменнине
Чунлăхра çухалса кайрăм.

Арăш-пирĕш кун-çула
Сăмахпа уçса параймăп.
Ӳхĕ ӳхлетсе улать,
Ӳхĕ мар — шиклев те айăп.

Айăпăм: ăшри, чунри...
Чĕремри хаяр хăравăм...
Чи усал тăшман — хамри,
Ҫĕнтерме — пултараймарăм.

Ырă тăвас тенисем
Начара куҫса пыраҫҫĕ...
Юмахсем, юмсем, тĕнсем
Ҫĕтнĕ чунăма шыраҫҫĕ.

Ӳхĕ ак каллех ӳлет:
Шарт! сиксе ҫӳҫентермелĕх.
Пурăнмашкăн — кам пĕлет?
Вĕрентсемĕр! Эп — пĕлмерĕм.

Пĕр-пĕрин ăшшипеле ăшăнтăмăр
Чĕремĕрсем кӳтсе ҫитсессĕн...
Ютшăнтăмăр пулĕ ĕнтĕ, ютшăнтăмăр
Курманни ултă уйăх иртсессĕн.

Ҫулăмсăрах эпир вутлăн ҫуннăччĕ,
Ик телейсĕр — пĕрле савăк тупнăччĕ,
Пуҫ ҫине юратулăх ҫунăччĕ —
Кăвак хупписем шалтах хупăнчĕҫ.

Ютшăнтăмăр пулĕ ĕнтĕ, ютшăнтăмăр,
Курса калаҫма та вăтанчăклă,
Кăвак хуппине туйнă чунăмăр
Сывлăм шывĕ пекех аманчăклă.

Манаймастăп сана, мĕн тăвăн, манаймастăп,
Ăш хыпать те — чӳклетĕп: «Ҫумăрччĕ!»
Ҫумăр витĕр вара пăшăлтататăп:
«Пуҫу ҫине телей ҫутăрччĕ...»

*

Чăтатăн. Тӳсетĕн. Чĕнмесĕр.
(Ăшу çунтарсассăн та вутлăн...)
Ăçта кайнине те пĕлмесĕр
Пĕрре эс килтен тухса утăн.

Çапла юрату ансассăн
Çӳлтен — çут шевлелĕх евĕр —
Ăс-хакăлăн тĕрĕс ансачĕ
Ăна чун çине ӳкермерĕ.

Хăвран хăраса — шухăшларăн:
Саву е кил-çурт тĕрекĕ?
Савманнине качча кайрăн
Ҫаймашкăн çитсессĕн черечĕ.

Сан пурте халь пур. Эс — тарасшăн.
Е чун кĕлленни хĕтĕртет-и?
Куççуль юхнине пытарасшăн
Кулатăн. Чăтатăн. Тӳсетĕн.

*

Те чечекленнĕ Хур кайăкăн çулĕ,
Те тӳпере çурăлать улмуççи.
Çĕмĕрт сим пылĕ ăсран ячĕ пулĕ,
Е тĕллентерчĕ çара хул пуççи?

Туйăнчĕ-шим? Шăпчăка та ăнланнăн,
Уйăх вăтаннăн пире курнипе,
Хамăр та — хупнă та куç — ыталаннă,
Яш вăхăтсем ялана пырас пек.

Нимсĕр, никамсăр та юлтăм нумай эп,
Ырă та иртĕ, усал та иртет.
Чунăм хытса, ăсланса пынă майăн
Тав сана, çĕмĕрт, сим пылушăн теп.

***

Пăрлак çине пăрлак килейрĕ ĕнтĕ,
Сăмах çине сăмах шуçса ӳкет.
Ай, мĕскĕн чунăмçăм, сисет пулин те,
Çапах теме шанать, теме кĕтет.

Тĕнче пĕтет: эс пурăннă тавралăх —
Ачашлăхпа сăпайлăх çеçкисем
Шăнса çĕре ӳкеççĕ. Те яланлăх
Типсе хуралчĕç ешĕл йывăçсем?

Пăрлак çине пăрлак килейрĕ ĕнтĕ,
Хаяр çине хаяр татах килет,
Ай, мĕскĕн чунăмçăм, сисет пулин те,
Шуйттан чури пулмашкăн килĕшмест.

Килĕшмессе — хура хĕрес йăтатпăр,
Тискер кĕвве эпир пултарас çук...
Пăрлак çине пăрлак. Йăлтах — пăр.
Пăр витĕр — Турă таврăнаслăх Çул.

***

Ай тур лаши тăрать тапăртатса,
Шур кăпăкĕ шур юр çине ӳкет.
Тĕнче суранĕн хĕлĕхне татса
Каллех-и кашкăр кĕтĕвĕ ӳлет?

Çилсем улать-и е çынсем урать?
Хаяр çине хаярлăх çĕкленет.
Çуна çинче Тур амăшĕ тăрать
Çатăрласа çумне хăй пепкине.

Тур лашисем тек кăпăк тăкас çук —
Шăмми-шаккишĕн — çăткăн тытăçу...
Юр çийĕн — куртăм-куртăм! — çул —
Тур амăш çулĕ вăл!
Тек ним те çук.

❁

Вăхăт иртет. Ĕнтĕ çутă сăну та
Ман асăмра шупкалса çухалать.
Эс — юрату та, эсех — ылхану та,
Мĕн тумалла-ши халь манăн, кала.

Вăхăт иртет. Тĕлĕксем сӳрĕлеççĕ.
Шăппăн килеççĕ чĕп куç савнăçсем...
Хушшăн та хушшăн таçтан илтĕнеççĕ:
«Туп, ма çухатрăн?» — текен сасăсем.

Туп, ма çухатрăн? Эп хам та çухалнă.
Пурăннă пек тукалатăп кăна.
Вăхăтлăх тапрăм-ши эпĕ вулканнăн
Ĕмĕрлĕх кĕл пек кăваккăн выртма?

❁

Çĕр çинче — этемсем,
Тӳпере — кайăксем,
Çӳлерех — юмахсем пурăнаççĕ...
Епле хăйрăн, этем,
Юмаха — чи çӳлтен —
Çĕр çине сĕтĕрсе антармашкăн.

Юмахри вупăрсем,
Арçури таврашсем
Ял-хула урамне тапса тулчĕç...
Çĕр çинче — этемсем,
Тÿпере — кайăксем,
Юмахсем — ăçта пурăннă — юлччăр.

Пирĕн хыçри кун
Тĕлĕк пекех туйăнать,
Çав тĕлĕкрен çын вăранать,
Куçне уçать те — хăрамасть.

Пирĕн айри çĕр
Шурлăх çеремĕ кăна...
Пĕр авăнать, пĕр пусăрнать,
Çĕр тĕпĕнчен мĕн сăрхăнать?

Пирĕн умри çул
Акăш хыççăн хывăнать,
Чупать-вĕçет те — ывăнать,
Шевле ĕçме выртса канать.

Пирĕн ăшри чун
Улăп пулма вĕренет,
Кун-çул усалĕ — эсремет —
Пире курать те — кисренет...

Мухтанăп-и çынсем мухтаннă чух?
Тиркешĕп-и курсан тиркешнине?
Атте-аннешĕн намăс пулас çук,
Тен, маншăн намăс пулчĕ вĕсене?

Тантăшăмсем — эпир — пĕр лав çинчех,
Шел, лавĕ иртрĕ пылчăклă çулпа,
Лав çинчисем — иртеймĕç лашинчен,
Лаши вара — хăй çулĕпех чупать.

Чун тунсăхларĕ-çке тасалăха!
Ай йăлăхтарчĕ ку лапра-çĕпре...
Йăпанăça шыран ачалăхра
Е ĕмĕтсем кăна таса, хитре?

Ан тив, çитеймĕп килĕшӳ патне
Шыра-шыра тĕнче çураçăвне.
Эп ăнтăлтăм унта, атте.
Эп туртăнтăм унта, анне.

✺

Ман тертĕме, тен, курчĕç турăсем?
Кун-çулăма хурла-хурла ылханмăп:
Китай пейзажĕ евĕр туратсем
Ман чӳрече умне ярапаланнă.

Кашни çулçи — пĕрле те уйрăм пек.
Çав çыхăну манра та пур, туятăп:
Çӳл ту çинчи Китай ăсчахĕ пек,
Килĕшĕве халь чунăмра шыратăп.

Тинех тĕнче ларать пек хăй картне,
Пурин валли те тупăнать пек вырăн...
...Пĕртен-пĕр майсăр-мелсĕр, ахăртнех,
Унта выртать эп утнă утма çулăм.

Ăхта-ха, чим-ха. Вăл та — кирлĕскер:
Пĕртен-пĕр юравли çав пулчĕ маншăн...
Чӳречемре — йăмра. Усăннăскер.
Йăваш та лăпкă
Чăвашри пейзажăм.

❁

Çĕрĕпех тĕлленсе тертленĕн,
Найкăшма та вăй юлмĕ санăн:
Чашкăрса уйрăлу çĕленĕ
Чĕрӳне тăтăшах суранлĕ...

Йĕп-йĕпе юр пек шурă минтерĕ:
Ку вăл — пирĕн тулман ĕмĕт.
Ирхи нӳрĕк сана çӳçентерĕ
Вăранса пахчана тухнăçемĕн.

Эс мана питĕ кирлĕ! кирлĕ!
Пĕрле мар та — çапах — ыр сунăм:
Тул çути пит шăлли тĕрлĕ,
Куççульне шăлса ил, чунăм.

Куççульне шăлса ил, чунăм,
Кун çути тĕррине курмашкăн:
Варринче — сар хĕвел çунĕ,
Ик енче — икĕ кимĕ — лармашкăн.

Киммисем тинĕсре чӳхенĕç.
(Тĕрлекенĕ çапла-ши тĕрленĕ?)
Пĕрлешеймĕ нихçан та ик кимĕ,
Уйрăлса та нихçан пĕтереймĕ...

*

Кĕмĕлленчĕ тĕнче, кĕмĕлленчĕç тĕмсем,
Тĕм çинчи çулçăсем кĕмĕлленчĕç...
Ĕнтĕ çитĕ. Çитет тĕттĕмре тĕмсĕлсе,
Чĕмсĕрленнĕ чĕреçĕм чĕмленчĕ.

Кĕмĕл уйăх çути кăмăла хăпартать,
Майлашать арăш-пирĕш кун-çулăм,
Эп çухатнă хаваслăх калла таврăнать,
Тĕпренет чун çинчи арман чулĕ.

Кĕмĕл саслăн ав Шетмĕ те шăнкăртатать,
Сан сăну пек сар уйăх çуталнă...
...Эс — тĕлленнĕ. Вăрантăм та тухрăм сада.
Сан сăнна сăввăмпа вараламăп.

*

Кун ывăнать сĕме чарса тăрса.
Кун ывăнать. Хĕвел анать.
Ăрша вылявĕ пулнă вырăнта
Эсрел çури хуçаланать.

Кун ывăнать сĕме чарса тăрса.
Ма ывăнать? Ăçтан пĕлен?
Эсрел хăтланкаларăшне курсан
Е — пирĕн те — хавал пĕтет?

Кун ывăнать сĕме чарса тăрса.
Ултавшăн мар, курманшăн мар.
(Тепĕр куна каçасшăн-тăр пуль çав...)
Вĕрентĕм тĕттĕмрен кулма.

Ахаллĕн — пурăнмашкăн май çуках...
Çĕрле суя-чăн тĕлĕксем
Çеçкеленеççĕ. Сĕмлĕх ăшĕнчен тухать
Ыран хĕвелĕ тĕлкĕшсе.

***

Çу пуçламăшĕ. Илĕртмĕш каç.
Сĕткенлĕ тĕнче канлĕн сывлать.
Çывăрас — çывăрма юрамасть —
Çак каç мансăрах çухалать.

Кил хапхи уçăлать ир çитсен...
Чи чухăн пуян эп! Акă — пурри:
Тĕлĕрен тĕмсене сирпĕтсе —
Унтан та кунтан — шăпчăк юрри!

Çу пуçламăшĕ. Янкăс самант.
Яш туйăмлă каç. Шухă чуну.
Ĕмĕт пек ир тĕтри салансан
Килет пуласси: шухăш-куну.

***

Малашлăха курса тăни-ши? Е
Пин ухмахран пĕри персе яни
Шат ăнсăртран килсе тухать тӳрре,
Анчах та пур: мал курăмлăх тени.

Утас çула тăман хуплачă чух
Хура тухатмăшсем хунаса кайрĕç...
Шартламине систернĕ эп, халь — çук!
Çур кунĕсем мал курăма тухайрĕç.

Вара каларăм эп лăплантарса:
Арканаканĕ — тĕнче мар, чуралăх!
Қашни-пĕр ванчăк çеçкене ларсан
Çĕн çураçуллă килĕшӳ çуралĕ...

Тусанне çавăраççĕ çавра çилĕсем...
Ут та ут çулупа — ма шалтах тĕлĕнен:
Қĕленче урампа киленсе иртнĕçем
Ик енче çут мерчен чечексем терĕн-им?

Қун пылакĕ кăна сан ятна терĕн-им?
Çын сăмахĕ ялан ыр сунать терĕн-им?
Ут та ут çулупа, ун вĕçне пĕлейми,
Паллă мар: хăш шырлан тĕпĕнче çĕтейни...

Ах, çапах та шăпа уттарать-чуптарать,
Ан ылхан çавра çилĕн хура юпине:
Пурăнасчĕ тени — тĕнчерен ытларах,
Вăй пĕтсен — çĕнĕ вăй — чунран çеç тупăнать.

Сисмесĕр çутăлать те тул,
Хаваслă мар — çĕр каçнăшăн:
Пĕр ĕмĕр тăршшĕ юрату
Пĕр каçлăха вырнаçрĕ-ши?

«Саватăп» тенĕ сăмахсем
Çĕр каçиччен шăнса пăрланнă.
Сĕткенсĕр, чунсăр эрешсем
Чӳречере лапсăрккаланнă,

Пăра вĕретĕн. Вĕрнĕçем
Тулта çак ĕмĕр палăрать-çке:
Савусăр ӳснĕ ачасем
Кил-çуртсăр йытăпа выляççĕ...

Эй, шартламаллă кунсен сивĕ чапĕ!
Кĕмĕл хирсем çийĕнчи йăлтăру...
...Юр айĕнчи мал хаваслă калча пек
Вăй чăмăртать ăшăнти пултару.

Ан ус пуçна шартлама чăпăрккишĕн,
Ан хуç чунна халсăр-пилсĕр юлса —
Ăшă-сивве хĕвĕшӳсĕррĕн йышăн
Кунĕ килнишĕн турра тав туса.

Йышăн хирсен кĕмĕлне шарламасăр,
Савнă тĕнче çеç пире юрататъ,
Аслă чунлишĕн хаяр шартлама та
Çепĕç, ачаш пултару çурататъ.

Хурлăхан куçĕпе тĕнчене тинкерсен
Курăн эс: ав анать çулпала, пуçне уснă,
Шухăшсен çĕклемне йăтнăскер, пĕр этем.

Хурлăхан куçĕпе тĕнчене эс săна-ха:
Уй хапхи уçса кĕчĕ çав çын пĕчченех —
Ялĕ ку тăван ялĕ пулас ĕнтĕ ахăр.

Хурлăхан куçĕпе хакласам тĕнчене —
Çĕр çинче тĕппипех çухалман ырă кăмăл:
Пахчапа кĕчĕ çын. Ачашлать тĕмсене.

Хула сана хăй сунтăхне
Чиксе хурать те — шăшилле
Кăштăртатса эс антăхни,
Чăнах та, кулăш-путишле

Курнать пуль сунтăх умĕнче
Тăраканнишĕн. Кам-ши вăл?
Пĕлместĕн эс, пĕлмест тĕнче:
Мĕнле хăват, асамлă вăй

Сана çак сунтăха чиксе
Картун-картун курупка пек
Кварталсенче пĕчĕклетсе
Чуптарчĕ кунĕ-кунĕпех...

...Çĕрле эс тĕлĕке путан.
Сĕме пуç хĕрлĕн чăмнăскер.
Шыв тĕпĕ мар, тӳпе тупан —
Тĕлĕкре çеç — ирĕклĕскер.

Шур хула хитре те — хăнăхаяс çук,
Хăнăхма, тен, пулĕ, юратаяс çук.

Пин те пĕр çын сăнĕ кун каçа умра —
Тĕлĕке килет-çке ялăмри йăмра.

Ватăлать те пулĕ, мăкланать те пуль,
Хамăр та хальхаççăн яшланмастпăр пуль.

Татăлса йĕместĕп (типнĕ пуль куççуль).
Ялне таврăнсан та — пурăнаяс çук.

*

Пуçри шухăшсем-и шăй-шай явăнаççĕ,
Хура кураксем-и çула пуçтарнаççĕ,
Мĕн-ма ĕмĕтсем-тĕревсем йăванаççĕ,
Шырлан тĕпнелле шанчăксем тăрăнаççĕ?

Мĕн тăвăн. Мĕн тăвăн? Этем шанчăкпа çеç
Утса çӳреме пултарать нишленмесĕр...
Хура кураксем явăнаççĕ чăтма çук —
Ман шухăшсене илейместĕр-и эсĕр?

Таçти тинĕс çийĕн вĕçсе иртнĕçемĕн
Анра-сухрана тӳперен вăркăнтарăр.
Хумсем хушшине пултăр вăл. Ман — этемĕн —
Юлма юрамасть ĕненӳсĕр, мăнтарăн.

Эп халь курака ĕненмешкĕн те хатĕр:
Кунсем те çынсем... Пĕтĕмпех пăтранаççĕ.
Кĕрхи ĕсĕклев кантăк çийĕн юхать те —
Хура кураксем çул çине пуçтарнаççĕ.

*

Раççейре кашни ӳсĕмĕн — хăй тĕрĕслевĕ:
Вăрçăпа, выçлăхпа, суяпа, эрехпе...
Пирĕн ӳсĕм куçне ĕненӳсĕрлĕх сĕмĕ
Тĕксĕмлерĕ. Эпир — кĕлетри кирлĕ мар йĕрĕхсем.

Антăлмасăр шыратпăр йăпанăç та канăç
Çĕрĕшсе тӳнекен кĕлетрех тусăнма,
Турă сăнлĕ тесе, тен, пире йăваланă?
Хамăра хыпашлатпăр — тăм йĕрĕх кăна...

Ман пулассӑм килмест суя тӗнӗн мӗлкийӗ,
Ман пулассӑм килмест чунсӑр тӑм кӗлетке,
Тӳперен ӳксе тулнӑ таса шур юр ҫиййӗн
Йӗр хывса тухса тартӑм хире кӗлетрен.

Ҫаврӑнать, ҫаврӑнать ҫил-тӑманлӑ ҫул-йӗрӗм,
Ҫын патне ҫул шыратӑп ҫынран эп тарса.
Этемле пурӑнмашкӑн пире тӳр килмерӗ,
Этемле хӑть вилесчӗ. Тен, пурнӑпӑр та...

Мана ҫавӑрать туйӑмсен ҫил-тӑманӗ,
Чуна пӑралать пин-пин йӗп йӗплени,
Эп — сирӗн пекех — ҫӗр ҫинче утаканӗ,
Эп — сирӗн пек мар — юрпала ҫӗкленни...

Вут хутнӑ пӳртри ӑшӑ тӗлӗкӗр витӗр
Пач урӑх тӗнчен канӑҫ кунӗ пулса
Ҫырма-ҫатрӑра шур юрпа эпӗ витӗп
Қалас сӑмаха каламасӑр, кулса.

Тӑман лӑплансассӑн, тулта ҫутӑлсассӑн
Вӑранӑр эсир ыйхӑран. Хӑвӑр та
Пӗлмесӗр: мӗскершӗн паян кун хавaслӑ,
Мӗскершӗн ҫап-ҫамрӑк чӗре кӑкӑрта?

Мана ҫавӑрттарӗ ҫаплах ҫил-тӑманӗ,
Пӗр кӳпкӗҫ, пӗр юнӗҫ тулаш чышкисем,
Сире туйӑнать юр пӗрчи пит айваннӑн,
Вӗсем — хӗллехи шартламан ҫеҫкисем.

Пĕлетĕн-и, мĕскер вăл — кĕркунне —
Сăрт çамкинче, кăра çилсем çинче...
Çын хушшинче телей тупайманне
Ăна шырарăм йывăç хушшинче.

Айван! Çич ĕмĕр параяс пулин —
Пурнайăп-ши тĕп-тĕрĕс эп пĕрне?
Сăрт çамкинче юманлансассăн тин
Ăнлантăм юман йывăç хуйхине.

Çĕр айĕн пĕр-пĕрне пусмăрласа
Пĕр-пĕринчен хуплаççĕ хĕвеле...
Эпир шутлатпăр: йывăçсем — таса.
Пире тивми! Ытти — пирнешкелех.

Этем сăнлин, этем чунлин — ялан
Хăй турă евĕрне манас пулмасть.
— Телейĕм çук! — теместĕп тек нихçан,
Юман пулса курни нăйкăштармасть.

Кĕрхи каçсем килеççĕ те кичеммĕн,
Кăра çилсем пуçлаççĕ кашлама.
Çĕр каçипех вара çӳçенчĕк çемĕ
Ăша кĕрет пĕр шелсĕр кăшлама.

Явап тытма чĕнет сĕм каç хӳхлевĕ,
Сан çылăхна виçет тарасапа,
Эс çылăх тунă, айăпланнă евĕр
Юлатăн куça-куçăн асаппа.

Қашни хăв утăмна аса илетĕн,
Аса илетĕн пĕчĕк йăнăшна,
Куратăн кăнтăрла курманнине те
Кĕрхи çилсем пырса кĕрсен ăшна.

Ирпе самай пусарăнчăк тăратăн,
Анчах туятăн: уссăр çĕр иртмен —
Эс аслăрах та, тен, кăшт ăслăрах та,
Чуну та санăн çутăрах-и, тен.

*Н. Плониш ӳкерӳ ăстине*

Ылтăн ыраш кĕлтисем хушшинче
Виçĕ ача. Аслати ачисем.
Çиçĕм çути ялтăран куçсенче
Шиклĕ çанталăк. Хăрав вучĕсем.

Пăт та патах — тусана сирпĕтсе
Çумăр тумламĕ çĕре пăталать...
Ан хăрăр, ан йĕрĕр — çумăр пĕтсен
Тăнăç шевли çĕр питне чуп тăвать.

Тухнăччĕ эсĕр кайма çырлана,
Тупрăр хăрав, çиçĕм çутнă куççуль.
Ан хăрăр — чун сирĕнте вăранать:
Йывăр пулсассăн та — ăнĕ кун-çул.

Мĕншĕн тесен аслати айĕнче
Упрĕç сире тусăмсем-чечексем...
...Ылтăн ыраш кĕлтисем хушшинче
Виçĕ ача. Аслати ачисем.

Чун та, кун та ытарми пахаччӗ
Ҫуҫусем кӑваккӑн тухатсан...
...Мальвӑсем халь кантӑкран пӑхаҫҫӗ
Хӗрлӗ, чакӑр, шурӑ тӗс сапса.

Килӗмре-и, улӑхра-хирте-и
Эп шыратӑп халь кӑвак чечек,
Ӑнсӑртран тӗл пулнӑ пӗр телейӗм
Тепӗр хут ума тухас пекех...

Чун та, кун та ытарми пахаччӗ,
Асӑмра ҫеҫ юлчӗҫ ҫав кунсем.
Мальвӑсем халь кантӑкран пӑхаҫҫӗ,
Кӑвак мар ҫеҫкеллӗ мальвӑсем.

Юратман ҫыннусем тӗлӗнсе калӗҫ: ма
Вӑйсӑрланчӗ ку ҫын, шӑпланчӗ?
Ҫураҫса пӗтерми тӗнчене ҫураҫма
Кӑйкӑр чунлӑхӗ ман тӗле анчӗ.

Сирсе хутӑм вара хурипе шуррине.
Ырӑпа усалтан мӑнаҫлӑ
Тӗпсӗр-вӗҫсӗр тӳпен куҫӗсем пуррине
Туйса илтӗм сӑмахсӑр.

Кулӑшла пек тахҫан хӗмленсе ҫуннисем.
(Мӗн-ха тӑвӑн? Кӑра этемччӗ...)
Ҫут тӗнче ҫутине тиркесе ҫӳриччен
Ху чунна йӗркене кӗртсемччӗ!

Хай тĕнче тĕттĕмпе тулчĕ те —
Тулса çитрĕ çаксkер:
Уçăлма пуçланать тул çути —
Кăвак çутă пексkер.

Ав лере, сĕмлĕхре, чĕмере,
Арçури айкашни...
Çĕрпе ир хушшинчи чикĕре
Пушă ăс кашлани.

Хуралса çуралаççĕ тĕмсем,
Палăраççĕ пӳртсем.
Тамăкла тĕлĕксем тĕлленсе
Ятсăрланчĕç Ятсем.

Çут çанталăк чĕм илĕ хуллен,
Сĕрĕмленĕ сăмах...
...Чунçанталăк çуккишĕн кулян,
Кун килет — чунсăрах.

Ан сивле тĕнчене:
Кăмăлу лĕнчĕр-ленчĕр...
Лар та пуйăс çине —
Станцисем черетленччĕр.

Эс тарман телейрен,
Шыраман инкек çулĕ,
Тăван ен теекен
Çĕр-шыву хыçа юлĕ.

Пĕтĕмпех кулăшла.
(Инкекӳ-телейӳ те!)
Ним çинчен шухăшла
Купери кантăк витĕр.

Хуларан хулана
Сĕтĕрнет тăлăх пуйăс,
Вăл ниçта та каймасть,
Çутăсем сана — суйрĕç.

Ман валли мĕн юлать? Уçă алăк.
Кĕр вăрманĕ тунсăхлани.
Çĕр çинчи евĕр мар: виçĕ талăк
Çумăр хыççăн вăрман пăсланни.

Шурă пăс явăнса çĕтнĕçемĕн
Каланман шухăшсен, туйăмсен
Йăтайми тулса çитнĕ çĕклемĕ
Тек пусармĕ пуçа тиенсе...

Ман валли мĕн юлать? Пĕр намăс,
Çакăн пек пурăннишĕн хальччен.
«Вĕçне тухрăн» тени — çул пуçламăш...
Пурăнса эп курман та иккен.

Тем хыпарласшăн, евитлесшĕн
Пин-пин çынран сана кăна
Çĕртме пуçламăшĕ çитсессĕн
Шевле вăййи карталанать.

Пĕр пĕчĕк улăх пур-ха санăн,
Ун ячĕ: Ик кĕпер хушши...
Унта шевле çеммин асамĕ
Янрать: тытăничченех ĕç çи.

Хура та шурă килчĕ пурнăç,
Çапах хал çитмĕ тиркеме,
Мĕн-ма тесен тăрса эп курнă
Шевлен ялтравлă картине!

Чун уçăлать, кĕрет шевлеçĕм...
Ни улăх çук, ни хуйăх çук.
Тӳпе таранччун çĕкленнишĕн,
Каçарăр та, ман айăп çук.

## ТУПМАЛЛИ

«Çеçен хир варринчи вăрманта...» . . . . . 5
«Шурăях та хута сăрласа...» . . . . . . . . —
«Хĕвел çути, тăпра сĕткенĕ...» . . . . . . . . 6
«Илеме курнипе чун юрлать-и...» . . . . . 7
«Çунтарать-и сана хура вут?..» . . . . . . . —
«Кулнă пек туса çӳретпĕр...» . . . . . . . . 8
«Анкă-минкĕ вăхăт арпаштарчĕ...» . . . . . 9
«Виçĕ пичче манăн, виçĕ пичче...» . . . . . . —
«Кунĕ кичем...» . . . . . . . . . . . . . 10
«Çурçĕр çилĕ вĕрет...» . . . . . . . . . . 11
«Сăмах, сăмах — упа лĕппи...» . . . . . . . —
«Тĕнче мана тинкерчĕ куçăмран...» . . . . . 12
«Сĕм вăрман варринче тăрăхла шур сĕтел...» . . —
«Кунсем килеççĕ те — çĕтеççĕ...» . . . . . . 13
«Хăрса пыракан юманлăх...» . . . . . . . . 14
«Чунсем пушă, ай ма пушă?..» . . . . . . . —
«Çуркунне çеçкисем...» . . . . . . . . . . 15
«Ырă ĕç, çутă ĕç сăвапне кураясшăн...» . . . 16
«Кам çурхи кунсене чĕре витĕр пĕлет...» . . . —
«Хуллен хуралса пĕлĕт татакĕ тухĕ...» . . . 17
«Хура вут — аçтаха çăварĕ...» . . . . . . . —
«Сыннисем сив çăлтăр пек çӳреççĕ...» . . . . 18
«Мăян хушшине шăтса тухнă...» . . . . . . 19
«Юмансем, тирексем, çăкасем...» . . . . . . —
«Çитрĕ. Хĕл ларчĕ...» . . . . . . . . . . 20
«Тулта тăманĕ алхасать ав...» . . . . . . . 21
«Хура хĕвел шăнса пăрланчĕ...» . . . . . . —
Ырăпа усал . . . . . . . . . . . . . . 22
«Путса вилчĕ тесе ан калăр...» . . . . . . . 24
«Çӳренĕ чух, кунланă чух...» . . . . . . . 25

«Шăнтса кĕрхи çилсем вĕрет...» . . . . . . —
«Қаçхи тӳпен асамлă уççинче...» . . . . . . 26
«Этем ури ярса пусман...» . . . . . . . . 27
«Хура та шурă танлăхне...» . . . . . . . . —
«Қĕрхи каççем ытла салхуллă...» . . . . . . 28
«Çынсем хĕрсе туй тунă чух...» . . . . . . . 29
«Тин кун-çул каларĕ: «Ывлăм!..» . . . . . . —
«Хурăнлăхра куккук сасси...» . . . . . . . . 30
«Ку телейлĕ çула...» . . . . . . . . . . . —
«Çутçанталăк тĕлĕрсе тăраннă...» . . . . . . 31
«Тарăху канаш параймĕ...» . . . . . . . . 32
«Ват йывăç ас илтерчĕ пурнăçа...» . . . . . . —
«Санăн умна чĕркуçлентĕм, Тур амăшĕ!..» . . . 33
«Çут тĕнчере тек ним те çук пекех...» . . . . . —
«Тӳпе инçечĕ хĕсĕнет...» . . . . . . . . . 34
«Керменĕм тăрринче — хĕвел...» . . . . . . —
«Шăпчăка — тĕлĕксем ăшĕнчи канлĕ каç...» . . . 35
«Çăварне карать кĕр каçĕ...» . . . . . . . . 36
«Ыр çынсен куççулĕсем юхаççĕ...» . . . . . . —
«Ах, чунăмçăм, чунăм — тăри!..» . . . . . . 37
«Епле çут çанталăк хитре!..» . . . . . . . . —
«Эп — çумăр тумламĕ анчах...» . . . . . . . 38
«Нихăçан кунашкал ăшă çумăр çуман...» . . . . 39
«Ăмăрткайăк шăна тытмасть...» . . . . . . . —
«Тепĕр чух тата пулаççĕ...» . . . . . . . . 40
«Қаç витĕр тухмасăр туймашкăн пулать-и...» . . . —
«Эп пĕлместĕп: мĕскершĕн таса чечексем...» . . . 41
«Чиркӳ никĕсне янă чул палăксем...» . . . . . —
«Вăраххăн уçăлать тĕллевĕм...» . . . . . . . 42
«Эс тухрăн савăнăç хирне...» . . . . . . . . —
«Савнă вăхăт манăн — каç пултти...» . . . . . 43
«Темех мар усал çыннăн хурлавĕ...» . . . . . . 44
«Ик енĕ — чечеклĕ те капăр...» . . . . . . . —
«Эс тупнă утрава хаярлăх пуçлĕ...» . . . . . 45
«Қĕмсĕр-кĕмсĕр туса аслати арканать...» . . . . —
«Мĕн кĕтетĕн эс, ăнтăлатăн эс?..» . . . . . . 46
«Қаçатăн-и чечеклĕ улăх урла...» . . . . . . —
«Пĕр талăк хыççăн тепĕр талăк...» . . . . . . 47
«Юрлать юррине шаланкă...» . . . . . . . . 48
«Қĕрхи вăрмана кĕрсе кайрĕ сукмакăм...» . . . —
«Эй, ват ăшши! Хĕвел çути...» . . . . . . . 49
«Пĕрремĕш хут юр çунине...» . . . . . . . . 50
«Қĕркунне. Купăста каснă вăхăт...» . . . . . —
«Сĕрме купăс çемми. Тӳпери хĕлĕхсем...» . . . 51
«Қĕленче ăшĕнчи джинн пекехчĕ...» . . . . . —

«Мана эс кирлĕ. Мĕншĕнне пĕлеймĕп...» . . . 52
«Шухăшлассăм килмест тĕксĕм кунăм çинчен...» . —
«Хăраттăм сан куçун тинĕсĕнчен...» . . . . . . 53
«Картлашка умĕнче — шăнăр куракĕ...» . . . . —
«Кас-кас ачашлать, хыпашлать çил-вăрманçă...» . 54
«Тем пулмĕ-ха тетпĕр...» . . . . . . . . . 55
«Юр çине хăй сăнне кĕренлерĕ те март...» . . —
«Çутă кун çĕр питне чуп туса...» . . . . . . . 56
«Ухĕ мĕн ӳхлетнине...» . . . . . . . . . . —
«Пĕр-пĕрин ăшшипеле ăшăнтăмăр...» . . . . 57
«Чăтатăн. Тӳсетĕн. Чĕнмесĕр...» . . . . . . 58
«Те чечекленнĕ Хур кайăкăн çулĕ...» . . . . . —
«Пăрлак çине пăрлак килейрĕ ĕнтĕ...» . . . . 59
«Ай тур лаши тăрать тапăртатса...» . . . . . —
«Вăхăт иртет. Ентĕ çутă сăну та...» . . . . . 60
«Çĕр çинче — этемсем...» . . . . . . . . . —
«Пирĕн хыçри кун...» . . . . . . . . 61
«Мухтанăп-и çынсем мухтаннă чух?..» . . . . —
«Ман тертĕме, тен, курчĕç турăсем?..» . . . . 62
«Çĕрĕпех тĕлленсе тертленĕн...» . . . . . . 63
«Кĕмĕлленчĕ тĕнче, кĕмĕлленчĕç тĕмсем...» . . 64
«Кун ывăнать сĕме чарса тăрса...» . . . . . —
«Çу пуçламăшĕ. Илĕртмĕш каç...» . . . . . 65
«Малашлăха курса тăни-ши? Е...» . . . . . —
«Тусанне çавăраççĕ çавра çилĕсем...» . . . . 66
«Сисмесĕр çутăлать те тул...» . . . . . . . —
«Эй, шартламаллă кунсен сивĕ чапĕ...» . . . . 67
«Хурлăхан куçĕпе тĕнчене тинкерсен...» . . . —
«Хула сана хăй сунтăхне...» . . . . . . . . 68
«Шур хула хитре те — хăнăхаяс çук...» . . . . —
«Пуçри шухăшсем-и шăй-шай явăнаççĕ...» . . . 69
«Раççейре кашни ӳсĕмĕн — хăй тĕрĕслевĕ...» . —
«Мана çавăрать туйăмсен çил-тăманĕ...» . . . . 70
«Пĕлетĕн-и, мĕскер вăл — кĕркунне...» . . . 71
«Кĕрхи каççем килеççĕ те кичеммĕн...» . . . . —
«Ылтăн ыраш кĕлтисем хушшинче...» . . . . 72
«Чун та, кун та ытарми пахаччĕ...» . . . . 73
«Юратман çыннусем тĕлĕнсе калĕç...» . . . . —
«Хай тĕнче тĕттĕмпе тулчĕ те...» . . . . . . 74
«Ан сивле тĕнчене...» . . . . . . . . . —
«Ман валли мĕн юлать? Усă алăк...» . . . . 75
«Тем хыпарласшăн, евитлесшĕн...» . . . . —

**Петĕр Яккусен**

**ÇАВРА КӲЛĔ**
**КРУГЛОЕ ОЗЕРО**

Стихи

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Эйзин*
Художник *В. М. Ширшов*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Р. К. Куприянова*

ИБ 2703

Сдано в набор 19.11.92. Подписано к печати 21.04.93. Формат 70×90[1]/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,92. Усл. кр.-отт. 3,07. Учетно-изд. л. 2,80. Тираж 1700 экз. Заказ 2296. Изд. № 57. Цена «С» 42.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по печати и информации.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

45.

Чăваш
кĕнеке
издательстви